чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

37/26443/№ Кĕçнерни кун, 2014, нарăс (февраль), 27 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Лару

Ӳсĕм лайăхрах ĕçлеме хавхалантартăр

Ытлари кун Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Унта хутшăннисем социаллă пурнăçпа экономикăн пĕлтĕрхи аталанăвне тишкерчĕç.

Тĕп хула тата унăн администрацийĕн пуçлăхĕсем Леонид Черкесовпа Алексей Ладыков доклад турĕç. Шупашкар федерацире йĕркеленĕ «Раççей хули. Наци суйлавĕ – 2013» проект çĕнтерӳçисенчен пĕри пулса тăнă. Пĕтĕм Раççейри конкурсра ăна çĕр-шыври чи хăтлă хуласен йышне кĕртнĕ. Шупашкарти 11 шкул федерацин чи лайăх вĕренӳ заведенийĕсен шутне лекме пултарнă.

Хулара 479 пин çын пурăнать. Кăçал 3 пин çын хушăнасса кĕтеççĕ. Демографи лару-тăрăвĕ аван: çуралакансен хисепĕ вилекенсен йышĕнчен пысăкрах. Район муниципалитечĕсем çак кăтарту патне те çывхараймаççĕ.

Шупашкар аталанăвĕ çынсене ырлăх кӳрекен пĕтĕм инфратытăма йĕркеллĕ тивĕçтернипе, ĕçсĕрлĕх шайне чакарнипе, çивĕч ыйтусене ытларах татса панипе палăрса юлчĕ. Предприяти-организацире вăй хуракансен кашни уйăхри ĕç укçи вăтамран 23811 тенкĕпе танлашнă – виçĕм çулхинчен 12% ӳснĕ. Ăна вăхăтра паман тĕслĕхе шута илмен.

161 предприяти тулаш экономика çаврăнăшне хутшăнать. Чăн та, импорт-экспорт калăпăшĕ виçĕм çулхинчен 23,6% пĕчĕкленнĕ. Промышленноçăн пĕтĕмĕшле индексĕ 5,6% катăлнă. Тĕп капитала инвестици сахалрах хывнă. Ку ĕçе кăçал лайăхрах йĕркелесшĕн. Уйрăммăн илсен федераци хыснинчен «Шупашкар: 500 çул» паркра «Чăваш Ен этносĕ» проекта пурнăçа кĕртме 245,5 млн тенкĕ куçарса парасса кĕтеççĕ. Чăваш наци конгресĕ 20 çул каялла унта этнографи музейĕ тума сĕннĕ. Йывăр урапа тинех вырăнтан тапранать-тăр.

2013 çулта хулара пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхĕн субъектне – 6,5%, уйрăм бизнесменсене 17,6% сахалрах шута илнĕ. Сăлтавне вĕсем РФ Пенси тата Медицина страхованийĕн фончĕсемпе татăлмалли тӳлеве паларăмаллах пысăклатнипе ăнлантарчĕç.

Хыснана Шупашкар хăй тĕллĕн ĕçлесе илекен тупăш – 7,1%, налук 6,2% нумайрах кĕнĕ. Уйрăм çынран, пурлăхран, çĕртен тытакан налук ытларах пухăннă. Налук шутланман тӳлев калăпăшĕ те самаях ӳснĕ. Муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕр мар фондне тара парса илнĕ тупăш та виçĕм çулхинчен 1,7% нумайрах. Пурăнмалли çурт-йĕр чылай ытларах хута янă. Нумай ачаллă семьесене пӳрт е дача тума 892 лаптăк пăхса хунă. Çулсене юсама пĕлтĕр ЧР Çул-йĕр фондĕнчен – 395,8 млн, Шупашкар хыснинчен 56,2 млн тенкĕ уйăрнă. Пĕтĕмлетсе каласан – çынсен пурнăçне лайăхлатассишĕн укçа-тенкĕ нумай тăкаклана, тĕрлĕ ĕç пайтах тунă.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хулан социаллă пурнăçĕпе экономикинче иртнĕ çул чылай енĕпе ӳсĕм тунине, çитĕнӳсен çулĕпе малалла кайма производствăра вăй-хăват çителĕклине палăртрĕ. Çакăнпа пĕрлех татса паман ыйтусем пур. М.Игнатьев хула администрацийĕнчен куçман пурлăхпа, çĕрпе усă куракансен аренда укçине вăхăтра куçарттарассишĕн лайăхрах ĕçлеме ыйтрĕ. Ĕç укçи конвертпа паракан предприятисемпе, предпринимательсемпе çине тăрса кĕрешме хистерĕ. «Хула программисене пурнăçа кĕртме хысна тулашĕнчи укçа-тенке ытларах явăçтармалла, патшалăхпа уйрăм инвестор юлташлăхĕсемпе усă курмалла», – терĕ вăл. Çак сăмахсене çирĕплетме Гемодиализ тата Медицина каяшĕсен пĕтерĕвĕн центрĕсен ырă тĕслĕхĕсене илсе кăтартрĕ. Вĕсене ĕçе кĕртме уйрăм çынсем укçа чылай тăкаклана. Республика Пуçлăхĕ çум курăк хупласа илекен çĕр лаптăкĕсене пайăрлама, вĕсене харпăрлăха е тара парса хыснана укçа куçарттарма ыйтрĕ.

■ **Михаил СЕРГЕЕВ**

Правительствăра

«Ĕненместĕп!»

Станиславский хăй вăхăтĕнче артистсем рольсене витĕмлĕ сăнарлайманнине курса çапла каланă. Ĕнер вара çак сăмах Правительство ларăвĕнче янăрарĕ – республикăн кăçалхи бюджетне улшăнусем кĕртессине сӳтсе явнă май унпа ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев усă курчĕ.

Бюджетăн тупăш пайĕ 1,2 млрд ытла тенкĕлĕх пысăкланать. Çак ӳсĕмĕн пысăк пайне хамăрăн тупăшсем ӳсни тĕревлени пирки каланă май Михаил Васильевич çакăнта республика аталанăвĕн кăтартăвĕсем аваннин витĕмĕ пысăккине палăртрĕ. Çапах Мускав та пулăшать – агропромышленноç комплексĕ валли, сăмахран, самай пысăк укçа уйăрмашкăн палăртнă. М.Игнатьев пĕлтернĕ тăрăх – хушма хуçалăха аталантарма çынсем илнĕ кредитсен процентĕсене субсидилесси чăрмавлăччĕ, халĕ ку енĕпе ыйту татăлать. Ял хуçалăхĕнчи пысăк проектсем валли илнĕ кредитсем тĕлĕшпе вара РФ Правительстви çитес çулхи 1-мĕш кварталта парăма татма шантарать.

Спорт объекчĕсен строительстви валли хушма укçа пулать. Çав шутра Шупашкарти Пăр кермене тума – 120 млн тенкĕ. Вĕрентĕве, ытти сферăна та хушма укçапа тĕревлеме пăхнă. Пĕтĕмĕшле илсен вара бюджет 2,3 млрд яхăн тенкĕлĕх ӳсмелле. Çавна май бюджет дефицитĕ те кăшт пысăкланĕ. Апла пулин те патшалăх парăмĕ, пачах тепĕр майлă, кăштах чакĕ. Вице-премьер – финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Светлана Енилина хамăр тупăшсем пысăкланнине чи малтанах пурлăх налукĕсемпе çыхăнтарчĕ.

Ӳсĕмлĕ терĕмĕр-ха та, çапах кăмăлсăрланакан та тупăнчĕ. Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов физкультурăпа сывлăх комплексĕ валли уйăрнă укçана чакарни пирки сăмах хускатрĕ: «Малтанхи бюджетра пĕр виçе палăртнăччĕ, халь чакарнă... Эпир çав укçа пуласса шанăччĕ...» М.Игнатьев капла кăмăлсăрланнипе килĕшмерĕ: «Сирĕн ку енĕпе хăвăрăн ĕçлемелле. Эсир Правительство пек çивĕч лару-тăрура ĕçлеместĕр. Укçа енĕпе дефицит пур, çавăнпа та Правительствăра çапла пĕтĕмлетнĕ: хулан хăйĕн те резервсем пур. Кун пирки ĕнер те калаçрăмăр-çке. Хулари хăшпĕр предприяти-организацире çынсене 5-6 пин тенкĕ кăна тӳлеççĕ. Коммерци тытăмĕсенче çынсем 5-6 пин тенкĕлĕх шалушăн ĕçленине ĕненместĕп! Сирĕн çавăнта йĕрке тумалла, унта хушма тупăш шырамалла!» Хула ертӳçисем чĕнме-хирĕçлеме хăяймарĕç...

Вице-премьер – транспорт министрĕ Михаил Янковский 2014 çулта республика бюджетĕнчен автоçулсене юсама, тытса тăма уйăракан укçана валеçес ыйтупа сăмах илчĕ. Тĕпрен юсама кăна 169 млн тенкĕ уйăраççĕ, çулсене тытса тăма – 300 млн. 33 км çула юсасшăн. Тата – Сăр, Çавал шывĕсем урлă хывнă кĕперсене. Тепĕр программа – ялсенчи çулсемпе çыхăннăскер. Канаш, Вăрнар, Вăрмар, Елчĕк, Пăрачкав тăрăхĕсенче, ытти районта çулсене юсамалла – ĕç калăпăшĕ пысăк, çак ĕçсене пурнăçлама 131 млн тенке яхăн уйăраççĕ.

Ялсенче пурăнакансен, çав шутра çамрăк çемьесемпе специалистсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалли списоксене çирĕплетмелли йĕркепе вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов палăштарчĕ. Çак программăпа килĕшӳллĕн кăçал 236 çемье пурăнмалли условисене лайăхлатма пултарĕ. Сергей Владимирович асăннă йĕркере пăхнă пĕр саманта пайăррăн палăртса хăварчĕ: программăпа килĕшӳллĕн туянакан çурт-йĕрĕн 5 çултан «аслăрах» пулмалла мар. Çакă патшалăх укçипе киревсĕр тĕллевпе усă курасран сыхланма кирлĕ.

М.Игнатьев вара бюджет укçипе çынсем ипотека мелĕпе усă курнине, çамрăк врачсене укçа панине аса илтерчĕ – пĕтĕмĕшле йыш 900 çемьерен те иртет-тĕр. Эппин, патшалăхăн çынсене пурăнмалли условисене лайăхлатассипе çыхăннă пулăшăвĕ чăннипех курăмлă.

С.Павлов тепĕр ыйтупа та сăмах илчĕ – районсене ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине, элита вăрлăх çитĕнтерессине аталантарма бюджетран пулăшса укçапа тивĕçтересси çинчен каласа пачĕ. Ăратлă выльăх валли пĕтĕмпе 71 млн тенкĕ уйăраççĕ, вăрлăх çитĕнтерме – 40 млн тенкĕ. Çав вăхăтрах ЧР Пуçлăхĕ çуллен укçа уйăрнине пăхмасăр выльăх шучĕ чакнăшăн пăшăрханнине палăртрĕ. Сăмах май, вице-премьер каланă тăрăх – республикăри выльăх кĕтĕвĕн 17% шăпах «ăратли» шутланать.

2014 çул валли инвалидсене ĕçе вырнаçтармалли квотăсене çирĕплетесси тавлаштармарĕ. Ĕçлев службин ертӳçи Сергей Димитриев пĕлтернĕ тăрăх – 100-500 çын ĕçлекен предприятисенче /унашкаллисем 243/ пĕр инвалид валли квота пулать, 500-тен ытларах тăк /44 предприяти/ – 2 ĕç вырăнĕ. Пĕлтĕр пĕтĕмпе 323 ĕç вырăнне квотăланă, 322 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Пĕр учреждени кăна, патшалăхăн социаллă университечĕ, инвалида ĕçе йышăнасси çине алă сулнă иккен, унта ахаль те темиçе инвалид ĕçленипе тӳрре тухасшăн пулнă. Прокуратура валли – ĕç-пуçа тишкермелли сăлтав.

Чăваш Енĕн чи хăтлă хула /ял/ тăрăхĕн ятне пама иртернĕ конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе строительство министрĕ Олег Марков паллаштарчĕ. Çак тупăшу – Раççей шайĕнчи конкурсăн тапхăрĕ. Пĕлтĕр çĕр-шыв шайĕнче Елчĕк ял тăрăхĕ хăйне кăтартнă – III степень диплома тивĕçнĕ. Преми те пур – 800 пин тенкĕ. Шупашкар хули те çав конкурсра палăрнă. Республика шайĕнчи тупăшура вара хула тăрăхĕсенчен Вăрнарпа Вăрмар мала тухнă. 5 пин çын таран пурăнакан тăрăхсен хушшинче – Кӳкеçпе Шăхасан, 3 пин çын таран пурăнакан ялсен хушшинче – Вăрмар районĕнчи Чупай, Комсомольски районĕнчи Чĕчкен, Çĕрпӳ районĕнчи Сăнав поселокĕ.

Ларура çавăн пекех граждансене кивĕ, юхăннă çуртсенчен куçармалли, нумай хваттерлĕ çуртсене юсамалли программăсене пурнăçланине тишкерчĕç. Строймин ертӳçи Олег Марков ку ыйтусемпе журналистсемпе курнăçса брифинг та ирттерчĕ те – тĕплĕнрех çитес номерсенчен пĕринче.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

КУН хыççăн КУН

56-04-26

Пулăшу кăçал та витĕмлĕ

Чăваш Енри пĕчĕк хуçалăхсене патшалăх кӳрекен пулăшу калăпăшĕ çулсерен ӳсет.

2006-2011 çулсенче çеç «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проектне тата 2008-2012 çулсенче ял хуçалăхне аталантарма палăртнă патшалăх программине пурнăçласа хушма хуçалăха аталантаракан 67,7 пин çемье 11,9 млрд тенкĕлĕх çăмăллăх кредичĕ илнĕ. Пулăшу илнисен 73 проценчĕ выльăх-чĕрлĕх витине юсаса çĕнетнĕ, 19% – ял хуçалăх техники, 7% выльăх туяннă, пĕр проценчĕ ытти тĕллевпе усă курнă.

Нарăсăн 20-мĕшĕнче РФ Правительствинче лару иртнĕ. Çĕр-шыври пĕчĕк хуçалăхсене пулăшмашкăн 4 млрд та 750 млн тенкĕлĕх субсиди уйăрасси пирки сăмах пынă, çав шутран 540 млн – Чăваш Енри хăйсен хуçалăхне тытса пыракансемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем валли. Çакă – регионсене уйăрнă чи пысăк сумма.

В.ВАЛЕНТИНОВ.

Çул хупă!

Çулсем сиенленесрен сыхланса çуркунне вĕсене вăхăтлăха хупасси йăлана кĕнĕ. Кăçал та çаплах пулать.

ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерствин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшĕччен республикăра йывăр транспорт хатĕрĕсене регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ çулсемпе çӳреме чарнă. Çуркуннехи çак чару çĕр-шывсен хушшинче груз турттаракан, апат-çимĕç, вăрлăх, почта, çавнашкал ытти груз илсе çӳрекен транспорта пырса тивмест. Çавăн пекех пассажирсене илсе çӳрекен автобуссем те пĕр чăрмавсăрах çула тухĕç.

К.АНТОНОВ.

Чăваш тумĕн уявĕ

Муркаш районĕнчи Н.В.Никольский ячĕллĕ музейра Сосновкăри шкулта вĕренекенсем валли «Чăваш наци тумĕ» урок-экскурси ирттернĕ.

Çав кун тĕлне аваллăх управçин ĕçченĕсем «Вирьялсен тумтирĕ ĕнер тата паян» экспозици хатĕрленĕ. Экскурсие Сосновкăри вулавăш ертӳçи Т.Степанова йĕркеленĕ, шкул ачисене авалхи чăваш çи-пуçĕ, хальхи тумĕ пирки тĕплĕн каласа панă.

Вĕренекенсем хăйне евĕр куравпа хаваспах паллашнă, уяв, йăла-йĕрке ирттермелли тума тăхăнса пăхма та пултарнă. Чăваш наци кĕпине этнографин виçĕ ушкăнне уйăрма пулать. Вĕсем тĕрĕ-ярешле, тĕспе уйăраларах тăраççĕ. Çавăн пекех çамрăк ăру вулавăшра уçнă «Чăваш халăх культури» курава та пахаланă. Ăна йĕркелӳçĕсем Культура çулталăкне халаллаланă.

Р.ИВАНОВА.

Професси тĕнчин ăстисем

ЧР Наци библиотекинче «Професси тĕнчи» республика фестивальне пĕтĕмлетнĕ. Рабочи тата инженери специальноçĕсен сумне çĕклес тĕллевпе йĕркеленĕ конкурса 62 ĕç тăратнă.

Фестивале хутшăнакансем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ӳкернĕ видеофильмсемпе видеороликсене кăтартнă, ятарлă плакатсемпе информаци материалĕсем хатĕрленĕ. Çĕнтерӳçĕсене виçĕ номинацире палăртнă. Чи лайăх плакат хатĕрлесе жюри членĕсене Çĕмĕрлери политехника техникумĕн студенчĕсем Андрей Горшковпа Денис Сальников тĕлĕнтернĕ. «Арт-профи-видео» номинацире Канашри транспорт-энергетика техникумĕнче вĕренекен Василий Федотов мала тухнă. Шупашкарти строительствăпа хула хуçалăхĕн техникумĕнчи Елена Полиевтова та юратнă профессийĕн хăйне евĕрлĕхĕсемпе паллаштарса палăрнă.

Е.АНДРЕЕВ.

Спутник хулара – Тутар культурин кунĕ

Çĕнĕ Шупашкарти Ваçлей Давыдов-Анатри ячĕллĕ çемье вулавĕн библиотекинче пуçласа «Буген байрам!» Тутар культурин кунĕ ирттнĕ. Ăна Культура çулталăкне халаллаланă. Уява хулари мăсăльмансен прихучĕпе пĕрле йĕркеленĕ.

Вулавăш ĕçченĕсем «Чечеклен тата хăватлан, Тутарстан! Халăхсемпе çĕр-шывсен пĕрлĕхĕнче!» литература куравĕ хатĕрленĕ. Праçник «Буген байрам!» литературăпа музыка композицийĕнчен пуçланнă. Хулари 18-мĕш лицейра вĕренекенсем Габдулла Тукай сăввисене вуланă. Музыка шкулĕн флейта класне çӳрекен Дамир Фархаев пухăннисене хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнă. Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Марина Соловьева, хулари мăсăльмансен прихучĕн председателĕ Минкадир Резяпов çамрăк ăрава Тутар культурин кунĕпе саламланă, асăннă вулавăш çумĕнче тутар культурин центрне йĕркелеме сĕннĕ. Уяв тутар наци апачĕпе, чейпе сăйланнипе вĕçленнĕ.

А.ГРОМОВА.

"Хыпар" çырăнăр – хыпарлă пулăр!

Хисеплĕ тăвансем, чăвашсем! Халăхăмăрăн тĕп хаçачĕ – "Хыпар" – пĕр ĕмĕр ытла ĕнтĕ пирĕнпе юнашар пурнăç çаврăмне çăмхалать: Раççей, республика кун-çулне çутатать, мухтавлă çыннăмăрсемпе паллаштарать, культура анине илсе кĕрсе чун çимĕçĕпе сăйлать, чăвашлăха упраса та аталантарса пыма хăват парать. "Хыпарăн" пĕрремĕш редакторĕ Николай Васильевич Никольский калашле – хаçат ырра вĕрентет, пурнăçăн паха енĕсем патне çул уçать, ăнтăлма хистет.

Ăнланатпăр: çанталăк ăшăтса пынăçемĕн ял çыннин ĕç нумайланать. Ая вут хунă пек чупкаласа çӳренĕ вăхăтра чун çимĕçĕпе туллин тивĕçтерекен "Хыпарсăр" тăрса ан юлăр. Пĕлетĕр: республикăри кашни почта уйрăмĕнче "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. Çак тапхăрта çырăнни çемье бюджетне перекетлеме май парать.

Чылай çын "Хыпара" çырăнмалли хак – 460 тенкĕ те 86 пус – пысăкраххине палăртать. Паллах, вăл пысăк мар, мĕншĕн тесен çур çулта 125 номер тухать. Кулленхи "Хыпара" çырăнса илме укçа-тенкĕ çитмесех пулсан сире эпир **"Хыпар" – шăмат куна" суйласа илме сĕнетпĕр. Вăл чылай йӳнĕрех – 218 тенкĕ те 22 пус çеç.** 16 страницăпа, тĕрлĕ тĕспе пичетленекен кăларăмра сире кирли пĕтĕмпех пур: çĕнĕ хыпарсем, тĕплĕ тишкерӳсем, публицист шухăшĕсем, истории кĕрсе юлнă çынсемпе пулăмсем, паянхипе иртнĕ пурнăç, ятарлă страницăсем, Мускаври хаçатсем мĕн çырнисем, хуçалăхра кирлĕ сĕнӳ-канаш, гороскоп, ярнелĕх теле-радио программăсем тата ытти те, тата ытти те.

Асра тытăр: "Хыпар" хаçатпа кам туслă, ăна вуласах тăрать – вăл пурнăçра та хăватлă, мал курăмлă.

«Чи лайăх атте» – хăюллисен тупăшăвĕ

Чăваш Республикин Хĕрарăмсен канашĕ ăна Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ умĕн ирттерет. Кăçалхи тупăшура хулари сакăр паттăра Чăваш патшалăх филармони сцени çинче курма тӳр килчĕ.

Çемьере, ачасене воспитани парассинче ашшĕсен тӳпи мĕнлерех? Чăн хурава асăннă конкурса курма килнисем тупрĕçех пулĕ: хăюлăхĕпе палăрнă ашшĕсем хăйсен çемьери чăн хаклăхне тата витĕмне тĕрлĕ енчен кăтартрĕç. Пултарулăх тупăшăвĕнче вĕсене мăшăрĕсемпе ачисем, кӳршисемпе тăванĕсем, ĕçтешĕсем пулăшни конкурсăн саваклăхне ӳстерчĕ.

Арçынсене хавхалантаракансен йышĕ пысăк. Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, жюри ертӳçи Лариса Игнатьева, Шупашкар хулин Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Ирина Клементьева маттур ашшĕсене саламлани уяв сумне вăйлатрĕ.

Хĕрӳ тупăшура «Чи лайăх аттĕ – 2014» ята чи тивĕçлине палăртма çăмăлах мар пулин те жюри çапла йышăнчĕ: çĕнтерӳçĕ – Владимир Арсеев. Вăл «С.П.Федоров академик ячĕллĕ «Куç микрохирургийĕ» комплексăн Шупашкарти филиалĕн директорĕн çумĕнче ĕçлет.

■ **Влада МИРСКАЯ**

Пĕтĕмлетӳ

Укçа виçи ӳсĕмлĕ

2013 çулта республикăра мĕн пур шайри бюджетсем валли пухнă укçа 34,6 млрд тенкĕрен иртнĕ, ку 2012 çулхинчен 6,2% нумайрах. Çак тата ытти цифрăна Федерацин налук службин Чăваш Енри управленийĕн коллегийĕн нумаях пулмасть иртнĕ анлă ларăвĕнче пĕлтерчĕç.

Федераци бюджетне хывнă виçе – 11,2 млрд тенкĕ, çакă çулталăк малрах пухнинчен 0,6% нумайрах. Республика бюджечĕн налук тупăшĕ 17,7 млрд тенкĕпе танлашнă. Кунта ӳсĕм çулталăк малрахринчен самай пысăкрах – 9,3%. Вырăнсенчи бюджетсене налуксемпе 5,7 млрд тенкĕлĕх тивĕçтернĕ – ӳсĕм 108,3% çитнĕ. Çавна май республикăн налук органĕсем мĕн пур шайри бюджетсем тĕлĕшпе палăртнă кăтартусене тивĕçтернĕ.

Управлени ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Ольга Никина палăртнă тăрăх – налук пухассипе çыхăннă тăнăçлăх чи малтанах налук органĕсен ĕçхĕлĕнчи тĕп çул-йĕрсемпе – тĕрĕслев ĕçĕпе, парăмсене татассипе – никĕсленнĕ. Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне тĕрлĕ шайри бюджетсен уменчи парăм 3 млрд тенкĕпе танлашнă. Çулталăк маларах пулнă кăтартупа шайлаштарсан ку 96,8% пулать. Республикăри налук тӳлекенсен парăмĕ федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче чи пĕчĕккисенчен пĕри.

Ларура палăртнă тăрăх – налукçăсем налук парăмĕсене шыраса илес енĕпе саккунсенче палăртнă мерăсемпе анлăн та туллин усă курнă. Çавна май хыснана 4 млрд тенкĕ ытла хывнă, çак кăтарту та 2012 çулхинчен 7,7% пысăкрах. Тĕрĕслев ĕçĕн тухăçлăхĕ ӳсни куç кĕрет. Пĕлтĕр инспекцисем вырăна тухса 516 налук тĕрĕслевĕ йĕркеленĕ. Вĕсен кăтартăвĕсем тăрăх бюджета хушма 1,5 млрд тенкĕ ытла хывнă. Камераллă налук тĕрĕслевĕсем кӳнĕ хушма укçа – 524,6 млн тенкĕ. Çавăн пекех тĕрĕслев ĕçĕн кăтартăвĕсем тăрăх хыснана 2 млрд тенкĕ ытла тӳлеттернĕ, çак виçе çулталăк маларахринчен 0,7% хушăннă.

Коллеги налук органĕсенче коррупципе кĕрешес ыйтусене те пăхса тухрĕ. Юлашкинчен управлени ертӳçи инспекцисен уменче 2014 çулта налук саккунĕсене пурнăçлас, тĕрĕслев ĕçне ăнăçлă йĕркелес, мĕн пур шайри бюджетсене палăртнинчен кая мар налук хывассине тивĕçтерес енĕпе тăракан тĕллевсемпе паллаштарчĕ.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, каçхине 13 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 765 мм, сывлăшри нӳрĕк 75 процент.

Кун тăршшĕ 10 сехет те 32 минут.

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 7, каçхине 14 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 762 мм, сывлăшри нӳрĕк 73 процент.

Кун тăршшĕ 10 сехет те 36 минут.

Çĕр

Тапхăрпа шута илеççĕ

Çĕр ыйтăвĕ çаплипех тавлаштарать. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура çапла каланă: "...Реформăсем пурнăçланакан 20 çул хушшинче те эпир ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене кирлĕ пек шута илес тата вĕсемпе усă курнине тĕрĕслесе тăрас енĕпе йĕрке туса çитерейм-ерĕмĕр. Хуçасăр çĕрсем тĕлĕшпе халĕ те право çирĕплетекен документсем йĕркелемен, çакă вара вĕсемпе тĕрĕс мар усă курасси патне илсе пырать. Çавăнпа та вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен умне çитес виçĕ çулта çÿлерех асăннă çĕр лаптăкĕсем тĕлĕшпе муниципалитет пĕрлĕхĕсен харпăрлăх правине регистрацилессине вĕçлеме тĕллев лартатăп. Министрсен Кабинечĕн çак ĕçре кирлĕ пек пулăшу кÿмелле, общество организацийĕсенчен вара ăна пурнăçланине тĕрĕслесе тăма ыйтатăп".

Çырури йĕркесем ЧР Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерствин кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе тÿрременех çыхăннă. Министерство усă курман лаптăксене вырăнсенче харпăрлăха куçарнине çирĕплетекен документсем хатĕрленине, регистрацилес ĕç епле пынине тĕрĕслес тĕллевпе общество канашĕ йĕркеленĕ, меслетлĕх сĕнĕвĕсен проектне хатĕрленĕ.

Правительство çуртĕнче министерство çуменчи общество канашĕн председателĕ, Шупашкарти кооперацион институтчĕн ректорĕ Валерий Андреев ертсе пынипе лару иртрĕ. Пухăннисем муниципалитет йĕркеленĕвĕсен территорийĕнчи çĕр лаптăкĕсене инвентаризацилес ĕçре пулăшма хатĕрленĕ меслетлĕх сĕнĕвĕсен проектне пăхса тухса сÿтсе яврĕç. Ку ыйтупа Светлана Енилина министр доклад турĕ. "Чăваш Енĕн пĕтĕм çĕр фончĕ 1834,5 пин гектар, вăл шутра ял хуçалăх пĕлтерĕшли 55% çеç, – терĕ Светлана Александровна. – Апла пулин те усă курман лаптăксем çаплипех пур-ха. Çавăнпа та республикăра юлашки çулсенче çĕр хутшăнăвĕсене уçăмлатас, йĕркелесе лайăхлатса çитерес тĕлĕшпе нумай ĕçлетпĕр".

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – усă курман çĕр ресурсĕсене пусă çаврăнăшне кĕртни бюджетăн тупăш пайне пуянлатма, социаллă ыйтусене татса пама май парать.

Инвентаризацие икĕ тапхăрпа иртерме палăртнă. Пĕрремĕшĕнче – медиа-плансем çирĕплетеççĕ, пушă выртакан çĕрсене палăртма планграфик, ĕç комиссийĕсене, ушкăнĕсене хатĕрлеççĕ.

Иккĕмĕшĕнче – тивĕçлĕ документсем пулсан та, анчах çĕрпе тĕллевлĕ усă курмасан, йĕркене пăхăнман тĕслĕхсем тупăнсан патшалăх çĕр тĕрĕслевĕн органĕсене пĕлтереççĕ, суд йĕркипе татăлма ыйту çĕклеççĕ.

Çĕрпе инвентаризацилекен комисси ĕçе йĕркелет, материалсемпе паллашать, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем валли сĕнÿсем хатĕрлет. Çак комиссие муниципалитет йĕркеленĕвĕн пуçлăхĕн çумĕ /вăл – комисси председателĕ/, администраци специалисчĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, общество канашĕн, Росреестр управленийĕн Чăваш Енри представителĕсем, çĕр лаптăкĕсен харпăрлăхçисем, арендаторсем кĕреççĕ.

Çĕç тăвакан ушкăнсем пушă лаптăксене палăртма вырăна тухаççĕ, унпа усă курма тивĕçлĕ документсем пуррине тĕрĕслеççĕ, акт çыраççĕ /ун çумне фотоматериал хушаççĕ/.

Çынсенчен ахаль выртакан лаптăксем пирки информаци илме район администрацийĕн Интернет сечĕн официаллă сайтĕнче "Халăх инвентаризацийĕ" баннер хатĕрлеме сĕнеççĕ.

Çĕр инвентаризацийĕ 2 тапхăрпа иртет:

пĕрремĕшĕ – 2014 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен;

иккĕмĕшĕ – 2014 çулхи чÿк уйăхĕн 20-мĕшĕчен.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пушă выртакан тата тухăçсăр усă куракан çĕр лаптăкĕсен реестрне тумалла, вĕсене Пĕрлехи информаци ресурсне кĕртме сĕнÿсем хатĕрлемелле.

Ку чухне çак ресурсра 396 гектар йышăнакан 131 лаптăк çинчен пĕлтерни пур /59 лаптăкĕ – 164 га – экономкласс валли çурт-йĕр тума, 72-шĕ /232 га/ – инвестици проекчĕсем валли/.

Меслетлĕх сĕнĕвĕсен проектне сÿтсе явма "Федераци службин патшалăх регистрацийĕн, кадастрĕн тата картографийĕн федераци кадастр палатин "Чăваш Енри федераци бюджет учреждени филиалĕн директорĕ Игорь Татур, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – Патшалăх пурлăх комитечĕн председателĕ Юрий Васильев, Çĕрпÿ район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов хутшăнчĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

"Фермăри хĕл" рейд

Кÿршĕсем икĕ тĕрлĕ ĕçлеççĕ

"Явапла тапхăра кĕркуннех тĕплĕн хатĕрленни халĕ питĕ лайăх курăнать, – çак сăмахсемпе кĕтсе илчĕ пире "Красный партизан" колхозăн Пучинкери ĕне фермин пуçлăхĕ Вячеслав Васильев. – Пирĕн коллектив район администрацийĕн ятарласа çирĕплетнĕ куçса çÿрекен ялавне ăнсăртран мар çĕнсе илчĕ. Хĕл кунĕсенче пит-куçа чĕпĕтсе вĕрнĕ çил те ĕнесемпе самăртма хупнă вăкăрсемшĕн хăрушă пулмарĕç. Витесене "шурă шăнасем" сывлăшра ярăнса вĕçме тытăниччене тĕплĕн юсанă. Тĕрлĕ йышши апат саппасĕ 2 çулталăклăх пур".

Тулăх тăрантарнине пула вăкăрсем талăксерен 1 килограма яхăнах ÿт хушаççĕ. Ĕнесеннен кулленех пĕтĕмĕшле 3000 килограмм патне сĕт сăваççĕ, 2300-2500 килограмне тирпейлекен предприятие ăсатаççĕ. Кассăра 1 миллион тенке яхăнах чĕрĕ укçа пур, унăн ытларах пайĕ сутакан сĕт тивлечĕпе хывăннă.

Колхоз ертÿçи Николай Иванов ĕç кунне фермăран пуçлать, вылăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăкланать, ыйтусем тупăнсан вĕсене татса парассине тĕпе хурать. Паллах, çакăн пек çĕрте ĕç кал-кал пымалла та. Хĕле кĕнĕренпе коллектив пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен продукци 25% ытларах туса илнĕ.

Халĕ фермăран ăсанакан сĕте унччен-хи пек Йĕпреçри "Сĕт империйĕ" ООО мар, хуçалăхăн тĕп ялĕнче – Пучинкере пĕлтĕр ĕçе кĕнĕ сĕт завочĕ йышăнать. Тирпейлекен предприяти вырăнтах пулни колхоза транспорт тăкакĕсенчен хăтăлма май панă. Продукци хăй хаклăхĕ пĕлтĕрхинчен палăрмаллах йÿнелни те çакăнпах çыхăннă.

Ферма пуçлăхĕ каланă тăрăх – вылăх-чĕрлĕх пăхакансем халĕ темиçе çул каяллахи пек тертленмеççĕ, кунти мĕн пур ĕçе механизмсем пулăшнипе тăваççĕ. Апат валеçекен ятарлă агрегат туяннă хыççăн операторсемпе скотниксен канăва ферма ĕçченĕсен çуртĕнче усăллă йĕркелеме те вăхăт тупăнать. Халĕ вĕсем пикенсех пултарулăх ушкăнĕсен районти фестивальне хатĕрленеççĕ. Ĕçхĕл ăнса пырсан чун-чĕре юрă ыйтать, савăк туйăмсемпе çунатланать.

Анчах Пучинкесемпе кÿршĕллĕ Калинин ячĕллĕ ЯХПК ĕне ферминче рейд бригадин членĕсене пачах тÿнтерле ÿкерчĕк кĕтнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Валерий Феофанов, районăн тĕп зоотехникĕ Алина Иванова тата çак йĕркесен авторĕ Эйпеçре ырă туйăм çуратакан пĕр тĕслĕх те тупаймарĕç. Ирхине 10 сехет çитнĕ пулсан та вылăхсене апат паманччĕ. Вылăхла пăхнипе ăçтан-ха сĕт антарччăр? Кооперативри 200 ĕнерен мĕн пурĕ те 230-250 килограмм çеç сĕт сăваççĕ. Çав вăхăтрах Пăтавăшпа Кушлавăш юхан шывĕсен хутлăхĕнче вырнаçнă "Путиловка" агрофирмăн "сухаллă" кашни вылăхĕ 4-5 килограмм сĕт антарать. Эккей, тахçан Йĕпреç районĕнче чи малта пынă Эйпеçсем паян хăйне евĕрлĕ, нименĕне танлаштарупа хаклама çук "рекордсем" лартаççĕ.

Хуçалăхра миçемĕш çул ĕнтĕ вылăхчĕрлĕхе хĕл каçмалăх тĕрлĕ апат зоотехника виçипе пăхнин çурри чухлĕ те хывса хăвараймаççĕ, унăн пахалăхĕ те питĕ янăх. Районăн тĕп ветврачĕ Валентина Иванова каланă тăрăх – Эйпеçсем çу кунĕсенче хатĕрленĕскер пур енĕпе те начар. Вăл сĕт антарма та, ÿт хушма та пулăшаймĕ.

"Ăшă вите – хăех çур апат", – тенĕ ваттисем. Кунта çак каларăша та ăша хывакансем тупăнман. Кĕр кунĕсенче мĕнле шухăшсемпе пурăннă-ши кооперативăн явапла çыннисем? Алла пуртă тытса ĕçлеме пултаракан вăй питти арçынсем пурте Мускава, ытти çĕре тухса кайнă-ши? Шăтăк-çурăка питĕрме ĕлкĕреймен витесене курсан пуçа çакăн йышши ыйтусем кĕреççĕ.

Кооператива ертсе пыма шаннă Александр Ильина çав çитменлĕхсемшĕн айăплама çук, мĕншĕн тесен вăл малтанхи пуçлăх – Юрий Ижендеев – юхăнтарса хăварнă хуçалăх пуçне тăнăранпа темиçе уйăх кăна-ха. Вăл хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшать, пĕчченех татăклă улшăну çулĕ çине пырса тухаймĕ. Çамрăк пуçлăха йышпа пулăшса пыни кирлĕ. Унăн хăйĕн те çакна ăша хывмалла, "пĕччен çын вăл – пĕр пÿрне, пилĕк çын вăл – пĕр чăмăр" тенине асра тытмалла.

Эйпеçсен лайăххине начарринчен уйăрма, çĕнĕлĕхсене асăрхама вĕренмешкĕн таста кайма кирлĕ мар. Пучинкесем акă мĕн тери сулмаклă утăмсем тăваççĕ! Пĕр-пĕринпе юнашарах вырнаçнă хуçалăхсенче икĕ тĕрлĕ лару-тăру хуçаланни район ертÿлĕхне те шухăшлаттармалла. "Панкрута тухасси патне çитсе тăнăскерĕн малашлăхĕ çук..." Çапла каланине район шайĕнчи явапла çынранах илтме тÿр килчĕ. Пĕр тĕллевлĕ çынсем пурте кар тăрсан юхăннă хуçалăха та "иккĕмĕш пурнăç" парасса шанас килет.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ...

Проектсене йышăнаççĕ

Республикăн Ял хуçалăх министерстви ЧР Президенчĕ ял тăрăхĕн строительствине комплексла тата пĕр вырăнарах пурнăçлас тĕллевпе кăларнă Указа ĕçе кĕртме çуллен конкурс ирттернĕ. 2014 çулта йĕркелĕ-ши?

О.ВАСИЛЬЕВ.
Вăрмар районĕ.

Ăна кăçал та ирттерет. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен социаллă пурнăçпа культура объекчĕсене юсамалли проектсене министерствăна çитермелли тапхăр нарăсăн 10-мĕшĕнчен пуçланнă. Тĕрлĕ документ чылай тăратмалла. Уйăммăн илсен конкурса хутшăнма ыйтса хут çырмалла, объекта тĕпрен çĕнетмелли проекта тата ăна техника-экономика тĕлĕшĕнчен ăнлантарса панине хатĕрлемелле, проект уссине çырса кăтартмалла. Кашни район муниципалитечĕн комиссие 2-4 проект ярса памалла.

Харпăрлăхран тупăш килет

Чăваш Ен пурлăхне приватизацилес ĕç пĕлтĕр мĕнле пынă тата 2014 çулта малалла тăсăлĕ-ши?

Н.ГУРЬЕВА.
Шупашкар районĕ.

2013 çулта ăна ăнăçлă сутнăран ЧР хыснине 559 млн тенкĕ – тупăш виçĕм çулхинчен 3,4 хут нумайрах – кĕчĕ. Харпăрлăха панисенчен йышĕнче: "Чăваш Ен" издательство-полиграфи комплексĕ", "Атăл" хăна çурчĕ" АУОсем, вăтам тата пĕчĕк предпринимательлĕхĕн 2 объекчĕ, АУОсен акцийĕсен 7 пакечĕ. Пĕлтĕр приватизацилеме палăртнă 24 объектран 17-шĕн акцийĕсене сутнă: плана 71% тултарнă. ЧР пурлăхне кăçал харпăрлăха памалли тĕллевпе килĕшÿллĕн патшалăхăн "Çĕрпÿ ветсанутильзавочĕ" унитари предприятине ăна модернизацилеме инвестора явăçтарас тĕллевпе сутăпăр. "Çĕнĕ Шупашкарти 97-мĕш аптека", "142-мĕш аптека", "Урмарская" кайăк-кĕшĕк фабрики", "Чăвашçăкăрпродукчĕ" АУОсем хăйсен акцийĕсене пурне те, "Николаевский" суту-илÿ комплексĕ" АУО – 29,35%, "Чăвашметалл" АУО – 20%, "АКБ"Чăвашкредитпромбанк" – 38,13%, "Санатория "Чувашия" – 50%, "Маслосырбаза "Чувашская" 22,12% сутать. Çавăн пекех куçман пурлăхăн 12 объектне аукцион ирттерсе харпăрлăха парăпăр.

Ирина УСТЕНКО,
ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн тивĕçне вăхăтлăха пурнăçлакан.

"Кăçал туса пĕтерĕпĕр"

Мăн Çавал ейĕве кайсан Çĕрпÿ хулипе Виçпÿрт салине шыв илесрен хÿтĕлеме тăпра хăпартса тимĕр-бетон тăрăхĕпе хăçан çирĕплетсе пĕтереççĕ?

А.ЗАХАРОВ.
Çĕрпÿ хули.

– Кăçал, – терĕ ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Иван Исаев. – Çĕрпÿ хулипе Виçпÿрт салине хÿтĕлес ĕçе тăсма иртнĕ çул вĕçĕнче федераци хыснинчен 90 млн тенкĕ куçарса пачĕç. 2013-2014 çулсенче строительствăна 204 млн тенкĕ хывма палăртнă. Çуркунне Мăн Çавал ейĕве тухсан çурт-йĕре, пахчана шыв илнĕ пирки çынсем тарăхаççĕ. Инженери конструкцине 2004-2006 çулсенчех тума пикеннĕ: хĕрăмсен Тихвин мăнастирне, Çĕрпÿри Хĕвел тухăç урамĕнчи çуртсене шывран хÿтĕленĕ.

Йĕркене улшăну кĕртнĕ

Кăçал сĕт туса илсе сутакан ял хуçалăх организацийĕсемпе фермерсене тĕрев парĕç-ши?

Г.ПАВЛОВА.
Канаш районĕ.

Патшалăх пулăшăвĕн тепĕр çĕнĕлĕхĕ 2013 çултан пурнăçа кĕнĕ: ял хуçалăх продукцийĕ хатĕрлекенсем /килти хуçалăхсăр пуçне/ сутакан кашни литр сĕте туса илнĕ чух пулакан тăкакăн пĕр пайне саплаштарма федераци хыснинчен субсиди уйăрнă. Ăна чи паха сĕтĕн кашни килограмĕшĕн – 2,81, пĕрремĕш сортлишĕн 0,93 тенкĕ хушса тÿленĕ. Пĕлтĕр çак субсидие кашни 100 ĕне пуçне пăру виçĕм çулхинчен сахал мар илнисене çеç панă. Сĕтри çу çăралăхĕ – 3,4, белок 3% кая пулмалла мар. РФ Правительствин кăçалхи кăрлачăн 14-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн сĕтшĕн пулăшу кÿмелли йĕркене улшăну кĕртнĕ. 2014 çулта субсиди илекенсен йышне мĕне пăхса кĕртеççĕ-ха? Иртнĕ çул кашни 100 ĕне пуçне 70 пăруран сахал мар илнине, кашни квартал иртнĕ хыççăнхи уйăхăн пĕрремĕш кунĕ тĕлне ĕне кĕтĕвне пĕр пуç та чакраннине, çулталăкĕпех /кашни кварталтах/ сĕте иртнĕ çулхинчен чакарманнине тĕпе хураççĕ. Пĕлтĕр кашни ĕнерен вăтамран 7 пин литр е ытларах сĕт сунă, кăçал çакăнтан 5% таран сахалрах сăваканнисем те субсидие тивĕçĕç. Улшăну федераци хыснинчен укçа илекенсен хисепне нумай пĕчĕклетмелле мар. Республикăра çулталăкра кашни ĕнерен вăтамран 7 пин литр сĕт сăвакан хуçалăх хисепĕ пысăк мар. Патшалăх кăçал аграрисене субсиди уйăрмалли йĕркене ытти енĕпе те улшăнусем кĕртнĕ. Вĕсемпе «Хыпарта» çитес номерсенче паллаштарăпăр.

Шутлав тапхăрĕ пырать

Çулталăк пуçламăшĕнче уй-хир, вăрман чĕрлĕхне палăртаканччĕ. Кăçал шута илеççĕ-и?

Н.ВАВИЛОВ.
Красноармейски районĕ.

"Ку ĕçе кăрлач-нарăс уйăхĕсенче пурнăçлатпăр, – пĕлтерчĕ ЧР сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин ертÿçи Владимир Кузюков. – Унта служба, çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан лаптăкĕсен специалисчĕсем, сунарçăсем хутшăнаççĕ. Раççей Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви çирĕплетнĕ шутлав меслечĕпе усă куратпăр. Икĕ уйăхра сунарçăсене тытма ирĕк панă, юр çинче йĕр хăваракан 14 тĕрлĕ чĕр чуна, 4 вĕçен кайăка шутлатпăр. Йĕр тăрăх каякансем валли 475 маршрут /4773 км/ çирĕплетнĕ. Вĕсем талăкра хăварнă йĕрсене палăртаççĕ. Шутлава ака уйăхĕ тĕлне пĕтĕмлетĕпĕр. Вăл сунар объекчĕн мĕн пур хисепне пĕлме, сунар тапхăрĕн вăхăтне, чĕр чун тытмалли квотăна палăртма, йыш сахалланнăран хăш-пĕр тĕсе тытмашкăн чарма кирлĕ.

Çутă пама шантараççĕ

Красноармейски районĕнчи Пăрăнтăк ялĕнчи Хĕвел тухăç урамне хăçан çутă кĕртĕç?

Е.ИЛЬИНА.
Красноармейски районĕ.

ЧР строительство министрĕ Олег Марков пĕлтернĕ тăрăх – республика Красноармейски районĕнчи çĕнĕ урамсене çутă кĕртме шаннă "Стройгранд-Групп" обществăн сирĕн урама темиçе çул каяллах электрификацилемелле пулнă. Анчах вăл хăйĕн тивĕçне министерствăпа çирĕплетнĕ килĕшÿре палăртнă вăхăт тĕлне пурнăçламан. Ăна пăрахăçлаттарас, малтан куçарнă укçана патшалăха тавăрттарас, подрядçă ĕçе пикенмен пирки саккасçă пекех юсав ирттерме палăртнă. Республика тата муниципалитет шайĕнчи автоçулсен 60 проценчĕ ытла кивĕ – юсав кĕтет. Вăрнар-Упи-Красноармейски çула республикăн Çулйĕр фондĕнче кĕмĕл пухăнса пынăçемĕн çĕнетĕпĕр.

ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерстви.

Инвестици программине лекмелле

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Мĕшĕл ялĕнчи Вăрман урамне асфальт çул хывма укçа кирлĕ. Ăна уйăрмалли йĕркене ăнлантарса параймăр-ши?

С.ГРИГОРЬЕВ.
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

ЧР Президенчĕн 2006 çулхи "Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсене васкавлăн туса пĕтересси çинчен" Указĕпе килĕшÿллĕн сирĕн яла асфальт-бетонран çул /2,4 км/ çитернĕ. "Раççей Федерацийĕн çул-йĕр ĕçхĕлĕпе автомобиль çулĕсем çинчен" тата "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен" саккунсемпе килĕшÿллĕн ял тăрăхĕнче автотранспорт çÿретесси, çул тăвасси – вырăнти хăй тытăмлăх тивĕçĕ. Строительство валли чи малтанах унăн укçа тупмалла. Вăрман урамĕнче çул тăвасси пирки Урхас Кушкă ял тăрăхĕн /Мĕшĕл унта кĕрет/ тата Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕсен кашнин хыснинче кĕмĕл мĕн чухлине, ытти тăкака тĕпе хурса йышăну кăларма ирĕк пур. Район администрацийĕн кăçал объекта республикăн пайăр инвестици программине кĕрттерес тĕллевпе ЧР Строительство министерствине экспертиза витĕр кăларнă çул проектне çитермелле.

Çулсене çуллен çĕнетĕç

Вăрнар районĕнчи Вăрнар-Мăн Явăш автоçула юсама вăхăт çитнĕ. Кăçал ăна 3 çухрăм çеç якатма палăртнă. Тата 14-шне хăçан çĕнетесшĕн?

Ю.ПЕТРОВА.
Вăрнар районĕ.

Пĕлтĕр Вăрнар-Мăн Явăш çулпа çыхăнакан Вăрнар-Упи-Красноармейски автоçулăн Красноармейски районĕнчи юппине 3 çухрăм юсаттартăмăр. Кăçал Вăрнар районĕнче çавăн чухлех çĕнетме палăртнă. Эсир ыйтнине пĕтĕмпех кăçал якаттараймастпăр. Кашни районта тенĕ

Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ

Чăваш Республикин Саккунĕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "УЙРĂМ КАТЕГОРИРИ ГРАЖДАНСЕНЕ ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔРПЕ КОММУНАЛЛĂ ПУЛĂШУ ĔÇĔСЕМШĔН ТÎЛЕС ЕНĔПЕ СОЦИАЛЛĂ ПУЛĂШУ ПАМАЛЛИ МЕРĂСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2014 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Уйрăм категорири граждансене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлес енĕпе социаллă пулăшу памалли мерăсем çинчен" 2005 çулхи нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕнчи 1 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 62, 63, 65 №-сем; 2006, 70 №; 2009, 80, 83 №-сем; 2011, 91 №; 2012, 96 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 1 статьяра:

1-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра "пурăнмалли çурт-йĕрпе" сăмахсене "пурăнмалли пÿлĕмпе" сăмахсемпе улăштарас;

виççĕмĕш-пиллĕкмĕш абзацсене çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан органне пăхăнса тăракан медицина организацийĕсене, Чăваш Республикин патшалăх вĕренÿ организацийĕсене тата муниципалитет вĕренÿ организацийĕсен педагогика ĕçченĕсене тата библиотекарĕсене;

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан органне пăхăнса тăракан медицина организацийĕсенче, Чăваш Республикин патшалăх вĕренÿ организацийĕсенче тата муниципалитет вĕренÿ организацийĕсенче должноçсенче ĕçлекен медицина ĕçченĕсене /медицина енĕпе мар аслă пĕлÿ илнĕ специалистсен должноçĕсенче ĕçлекенсемсĕр, медицинăн кĕçĕн персоналĕсĕр пуçне/ тата фармацевтика ĕçченĕсене /фармацевтикăн кĕçĕн персоналĕсĕр пуçне/;

патшалăхăн социаллă ыйтусене тивĕçтерекен секторĕнчи организацисенче должноçсенче ĕçлекен медицина ĕçченĕсене /медицина енĕпе мар аслă пĕлÿ илнĕ специалистсен должноçĕсенче ĕçлекенсемсĕр, медицинăн кĕçĕн персоналĕсĕр пуçне/, социаллă ĕçченсене тата педагогика ĕçченĕсене";

улттăмĕш абзацра "Чăваш Республики тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тытса пыракан культура учрежденийĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин патшалăх культура организацийĕсен тата муниципалитет культура организацийĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

2-мĕш тата 3-мĕш пайсене çакăн пек çырса хурас:

"Асăннă категорири граждансене, Чăваш Республикин патшалăх вĕренÿ организацийĕсен тата муниципалитет вĕренÿ организацийĕсен педагогика ĕçченĕсемсĕр пуçне, пурăнмалли пÿлĕмпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлеме, çавăн пекех пĕтĕмĕшле ăшăтмалли тытăмсăр çуртсене хутса ăшăтас тĕллевпе топливо туянас тата ăна кÿрсе килес енĕпе паракан социаллă пулăшу мерисем сыхланса юлаççĕ.";

4/ 4 статьяра "пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн" сăмахсене "пурăнмалли пÿлĕмпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн" сăмахсемпе улăштарас;

5/ 5 статьяра:

пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Пурăнмалли пÿлĕмпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлес, çавăн пекех пĕтĕмĕшле ăшăтмалли тытăмсăр çуртсене хутса ăшăтас тĕллевпе топливо туянас тата ăна кÿрсе килес енĕпе паракан социаллă пулăшу мерисем темиçе сăлтавпа илме право пур граждансене Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн хăйсем суйласа илнĕ май пĕр сăлтав тăрăх социаллă пулăшу мерисемпе тивĕçтереççĕ.";

иккĕмĕш абзаца "пурăнмалли çурт-йĕр" сăмахсене "пурăнмалли пÿлĕм" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, нарăс, 24, 1 №.

Чăваш Республикин Саккунĕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ИНВАЛИДСЕМ ВАЛЛИ ĔÇ ВЫРĂНĔСЕМ КВОТĂЛАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 1 ТАТА 2 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2014 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен" 2011 çулхи чÿк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 68 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 92 № /I том/; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5 №; "Республика" хаçат, 2013, чÿк уйăхĕн 28-мĕшĕ/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ статьяна çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"ĕç условийĕсен ятарлă хаклавĕ - производство хутлăхĕн тата ĕç процесĕн сиенлĕ тата /е/ хăрушă факторĕсене тупса палăртас тата çав факторсем /вĕсен чăн пĕлтерĕшĕсем федерацин ĕç тăвакан влаçĕн Раççей Федерацийĕн Правительстви полномочи панă органĕ ĕç условийĕсем тĕлĕшпе палăртнă нормативсенчен /гигиена нормативĕсенчен/ уйрăлса тăнине тата ĕçлекен çынсене уйрăмшар е ушкăнпа хÿтĕлемелли хатĕрсемне усă курнине шута илнĕ/ ĕçлекен çын çине витĕм кÿнин шайне хаклас енĕпе вĕçе-вĕçĕн туса пымалли мероприятисен пĕр пĕтĕм комплексĕ.";

2/ 2 статьян 4-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"4. Инвалидсене ĕçе илмелли квотăна шутласа палăртнă чухне ĕçлекенсен списокпа пăхнă вăтам хисепĕн шутне сиенлĕ тата /е/ хăрушă ĕç условийĕсенче ĕçлекен çынсене кĕртмеççĕ /ĕç условийĕсем сиенлĕ тата /е/ хăрушă пулнине ĕç вырăнĕсене ĕç условийĕсем е ĕç условийĕсен ятарлă хаклавĕн результачĕсем енĕпе аттестаци туса ирттернин результачĕсем тăрăх палăртаççĕ/.".

2 статья

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

2. Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен" 2011 çулхи чÿк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 68 №-лĕ саккунĕн /çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ/ 1 статйин çиччĕмĕш абзацĕн тата 2 статйин 4-мĕш пайĕн положенийĕсен вăйĕ 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, нарăс, 24, 2 №.

Чăваш Республикин Саккунĕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУНИЦИПАЛЛĂ НОРМАТИВЛĂ ПРАВО АКЧĔСЕН РЕГИСТРНЕ ЙĔРКЕЛЕМЕЛЛИ ТАТА ТЫТСА ПЫМАЛЛИ ЙĔРКЕ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2014 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă нормативлă право акчĕсен регистрне йĕркелемелли тата тытса пымалли йĕрке çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 67 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2008, 78 №; 2010, 87 №; 2011, 90 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 3 статьян 3-мĕш пайĕнче "хут çине çырса тата" сăмахсене кăларса пăрахас;

2/ 4 статьян 2-мĕш пайĕн пиллĕкмĕш абзацне "хирĕçлевсем" сăмах хыççăн ", требованисем" сăмах хушса хурас;

3/ 5 статьян 1-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"кашни уйăх вĕçленнĕ хыççăн пилĕк ĕç кунĕ хушшинче муниципаллă актсене, çавăн пекех асăннă актсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă /халăха пĕлтернĕу çăл куç тата пичетленĕ кун çинчен калакан сведенисене полномочи панă органа электронлă йĕркепе, электронлă майпа алă пусса, ярса парассине;";

4/ 6 статьян 1-мĕш пайĕнче "вунă" сăмаха "вун пилĕк" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун 2014 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, нарăс, 24, 3 №.

Чăваш Республикин Саккунĕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "МУНИЦИПАЛИТЕТĂН ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔР ТĔРĔСЛЕВĔ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХĂН ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔР НАДЗОРĔН ОРГАНĔПЕ МУНИЦИПАЛИТЕТСЕН ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔР ТĔРĔСЛЕВĔН ОРГАНĔСЕН ХУТШĂНĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 3 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2014 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕ тата Чăваш Республикин патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр надзорĕн органĕпе муниципалитетсен пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕн органĕсен хутшăнăвĕсем çинчен" 2012 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 58 №-лĕ саккунĕн /"Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ/ 3 статйин 2-мĕш пайне улшăну кĕртес, унран "муниципалитет пĕрлешĕвĕн уставĕпе тата ытти" сăмахсене кăларса пăрахас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичет

Пуху

Çăлăнăç ăçта?..

Çак кунсенче ялти пĕчĕк çеç клубра Çĕмĕрле районĕнчи Анат Кăмаша ялĕнче пурăнакансен пĕрлехи пухăвĕ иртрĕ, унта асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ 2013 çулшăн отчет турĕ. Халăх йышлă пухăнмарĕ: хĕрĕхе яхăн çын çеç, тĕпрен илсен – пенсионерсем. Учительсемпе интеллигенцин ытти представителĕ темшĕн килмен. Пушă вырăнсем юлчĕç, эппин, çынсем влаçа ĕненме, хăйсене илтессе, ăнланасса тата пулăшасса шанма пăрахрĕç. Темиçе кун маларах пуçлăх Тури Кăмашара отчет тунă.

Пуху умĕн ялти ветерансен концерчĕ иртрĕ. Ăна художество пултарулăхĕн смотрĕ терĕç, жюрие культура уйрăмĕн пуçлăхĕ З.Карпова ертсе пычĕ. Аслă çулти хĕрарăмсем Н.Ахтяров баянистпа питĕ хитре юрларĕç! Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.Савастьянов та тăрнасем пирки юрă шăрантарчĕ. Пухăннисем концертпа кăмăллă юлчĕç, алă чылайччен çупрĕç.

Мероприятин ĕç пайĕ пуçланнă тĕле Çĕмĕрле райадминистраци пуçлăхĕ Л.Рафинов килсе çитрĕ. Президиума ял тăрăхĕн пуçлăхне Н.Савастьянова, Л.Антоновăна /секретаре/ тата ял тăрăхĕн депутатне Н.Адера суйларĕç. Пухăва пуçлăх хăй ертсе пычĕ. Ял тăрăхĕн социаллă аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем пирки Н.Савастьянов доклад турĕ. Ял тăрăхĕн тупăшĕсемпе тăкакĕсем пĕрешкелтерех иккен: 2,55 млн тенкĕ. Тупăш пайĕ кĕнĕ налуксенчен /331 пин тенкĕ/, тупăш тăрăх илекен налукран /134 пин тенкĕ/, пĕрлехи ял хуçалăх налукĕнчен /1,2 пин тенкĕ, ахăртнех, «Дружба» ЯХПКран/ йĕркеленнĕ. Пĕтĕмпе – 474 пин тенкĕлĕх. Ял тăрăхне пулăшмашкăн районпа республика бюджечĕсенчен 2,148 млн тенкĕ панă, урăхла каласан хамăрăн укçа тўпи 18-19% çеç танлашать. Темиçе çул каялла çеç-ха хамăр тупăшсен тўпи 22-25%-чĕ. Сăмах май, Çĕмĕрле районĕ 5,6 млн тенкĕлĕх инвестици кредичĕ илсе парăма кĕрсе кайнă. Районăн пĕтĕмĕшле парăмĕ мĕн чухлĕ пулнине каламарĕç.

Халăх йышĕ Анат Кăмашара – 581 çын, Тури Кăмашара – 163, Атăл поселокĕнче – 161, Ульян ялĕнче – 86. Çулталăкра пĕтĕмпе те 3 ача çеç çуралнă, 16 çын вилнĕ. Шухăшлаттаракан пулăм... 52 çын ют çĕре ĕçлеме çўрет, ĕçсĕррисем çук пек туйăнать. Эппин, йывăрлăхсем çук-шим?

Иртнĕ çул пĕлтерĕшлĕ пысăк ĕçсемех пурнăçланă, 16 хваттерлĕ икĕ çурт таврашĕнчи тротуарсене йĕркене кĕртнине шутламасан. Пуçлăх малашне ялсенче пропискăна тăма Çĕмĕрле хулинче çеç май килнине пĕлтерчĕ, ку, паллах, япăх. Виçĕ выльăх масарĕ тавра хўме тытмалла – 1 млн тенке яхăн кирлĕ, анчах укçа çук, Финанс министерствине шанатпăр. 2014 çулта нимĕнле стройка та планламаççĕ, мĕншĕн тесен укçа çук. Ялта шывпа тивĕçтерекен тытăм тумалли проект валли халăх пулăшмалăх тесе 565 пин тенкĕ пуçтарнă, анчах таса мар чунлă проектировщиксене пула проект хатĕрлессин вăхăчĕ иртсе кайнă, экспертиза ăна япăх пахалăхлă пулнăран пăрахăçланă. Проекта лайăхлатса малалла хатĕрлеççĕ, вăл хăçан пуласси паллă мар. Ку ĕçре Федераци Пухăвĕн депутачĕ Г.Николаева сенатор пулăшма шантарнă пек ас тăваççĕ, анчах мĕн енĕпе тата хăçан – паллă мар. Тĕрĕссипе, хамăрах айăплă: енчен те ĕç тăвакансем тĕлĕшпе йăнăшнă тата пĕтĕм хута вăхăтра паман. Л.Рафинов ку ĕçре пулăшма шантарчĕ, анчах мĕншĕн ытла кая юлса? Тата мĕншĕн-ха ял тăрăхĕн пуçлăхĕ халăх укçипе пĕрченех хуçаланать, яваплă ĕçе районти специалистсене те явăçтармасть? Ун пек çунса кайма та пулать-çке. Ахаль те «ухмаха» юлтăмăр.

Кашни хуçалăх хăй ирĕкĕпе тирпей-илем валли паракан 200-шер тенке пухасси те /малтан ăна сулăм укçи тетчĕç/ питĕ япăх: пĕтĕмпе те 30 çын çеç панă. Темĕнле тўрре тухас тесен те ку вăл – ял тăрăхĕн аппарачĕ ĕçлесе çитерейменни, çак укçапа яла хăтлăлатаймастăн пулин те.

Докладçăна ял тăрăхĕн бюджетне пуянлатакан 2-3 предприятие, фермера, предпринимателе палăртмашкăн сĕнсе ыйту пачĕç. Вăл вара никама та асăнаймарĕ, нимĕнле цифра та, нимĕнле хушамат та илсе кăтартаймарĕ. Бюджета, ял тăрăхĕн экономикине мĕнле майпа пуянлатасшăн – ку та вăрттăнлăх. Районти пуçлăх та, ыйту мĕн тери пĕлтерĕшлине ăнланса, нимĕнпе те пулăшаймарĕ, налук ĕçченĕсенчен «вăрттăн» кăтартусене илессинчи теменле йывăрлăхсем пирки калаписĕр пуçне. Ахăртнех, пуçлăхсен ăнăçсăрлăхĕ шăпах çакăнта пытаннă: экономикăна аталантарма, планлама /прогнозлама/ пĕлменни /чи малтан вырăнти предпринимательсем пултарайманни/ вилсе пĕтесси патне çитерес хăрушлăх пур.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçне çителĕклĕ /удовлетворительно/ тесе хак пачĕç, чăн та, пухăва килнисенчен нумайăшĕ аллине пачах çĕклемерĕ, анчах çакă «пĕр саслăн» теме чăрмантармарĕ.

Ыйтусен, сĕнўсемпе тавлашусен /тепĕр чухне сасса хăпартни те пулчĕ/ вăхăтĕнче çак ыйтусемпе йышăну турĕç:

- чăвашла панă ыйтусене чăвашсен тăван чĕлхепех хуравламалла;
- 2014 çулта кашни килтен малтанхи пекех 200 тенкĕ пуçтармалла;
- каснă тата типсе кайнă йывăççем вырăнне Çĕнтерў кунĕччен çамрăк хунавсем лартмалла, «Çĕнтерў: 40 çул» сквера чĕртсе тăратмалла;
- ял тăрăхĕн пуçлăхĕн пĕлтерĕвĕ – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вилнисен ячĕшывне палăртса трафарета ветерансем хăйсем вырнаçтарма шантарни пирки – «ултав!»;
- Çĕнтерў палăкĕ çине вăрçа хутшăннисен тата вилнисен списокне çирĕплетмелле, çĕнĕ обелиск тумалли проектсен конкурсне пĕлтермелле, мĕншĕн тесен хальхи арканма пуçланă;
- çуркуннепе кĕркунне пысăк тиевлĕ машинăсем иртсе кайнăшăн пысăк штрафсем çирĕплетмелле;
- Анат Кăмашара тата ытти ялта территорири общество хăй тытăмлăхне йĕркелессин ыйтăвне тĕплĕн тишкермелле, çывăх вăхăтрах ТОС туса хумалла;
- шыв тытăмĕн проектировщикĕсене комиссин ял представителĕсемпе пĕрле проекта хăвăртрах туса пĕтерме хистемелле, ял тăрăхĕн проекта экспертиза урлă васкавлă кăларассине тивĕçтермелле;
- çăвана яланах тирпейлесе тăмалла;
- Анат Кăмашана ветеринари тухтăрне илмелле, унсăрăн выльăх-чĕрлĕх тытасси чăрмавлăрах;
- студентсем ял хуçалăх академине пĕтернĕ хыççăн каялла таврăнмаççĕ, ĕç укçи пĕчĕк;
- хăйăра хăйсем тĕллĕн турттарнă тата çўп-çап тăкнă карьерта – икĕ ял хушшинче, çул çывăхĕнче – шыв тăракан вырăн туса пĕтермелле;
- шкулăн кирпĕч çурчĕне тата унăн пулнă территорипе вырăнлă усă курас ыйту пирки тĕплĕн шухăшламалла;
- пуçлăхăн хăйĕн программи пулмалла;
- никам ыйтман çĕрсене муниципалитет пурлăхне куçарассине хăвăртлатмалла тата вĕçлемелле, хастар çынсен вара вĕсемпе усă курма ăнтăлмалла – çак çĕрсене ют çĕр-шывра пурăнакансем туянман чухне;
- районăн тĕп зоотехникĕ Т.Атяшева уйрăм хушма хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх тытас ыйтăва татса парассинчен пăрăнса юласшăн, «ку вăл сирĕн йывăрлăх» тет;
- «Дружба» ЯХПК ячĕшĕн çеç тытăнса тăрать;
- ĕçе пуçăнакан фермер Владимир Самарин 1 млн тенкĕлĕх грант илнĕ;
- ялта пĕтĕмĕшле пĕлў паракан шкулăн – çывăхри чылай ялăн малашлăх аталанăвĕн пĕтерĕшлĕ объекчĕн – проектне хатĕрлессине тата унăн строительствине хăвăртлатмалла;
- Тури Кăмашари 960 метр тăршшĕ автоçулăн строительствине халĕ пур проектпа плана кĕртме тăрăшмалла;
- çапкаланса çўрекен йытăсем пирки администрацие заявлени çырмалла, пĕрле сăн ўкерчĕксем памалла тата хуçисене кăтартмалла;
- сăмакун юхтарма юрать, сутма вара – юрамасть, пысăк штраф тўлеттереççĕ;
- муниципалитетăн куçман пурлăхĕне çĕрсене сутасси тата пулăшу ĕçĕсемпе çыхăннă суту-илў /торги/ пирки уççăнрах пĕлтермелле, вырăнтисене – адреслăн;
- 105 га лаптăклă çĕре сĕт заводне мĕншĕн вăрттăн сутнă, унта вĕсем каяшсене тăкаççĕ, ку çĕре ял тăрăхне каялла тавăрмалла;
- колхоз председателĕ е управляющийĕ кирлĕ;
- кăмăл пуррисем Н.Адерăн хушма хуçалăхĕн фермине пырса уçăлтару картишне пăхма пултараççĕ;
- çынсем пурнăçа лайăхлатма ыйтаççĕ – кăшкăрмаççĕ;
- пуху секретарĕн йăлтах çырмалла тата протокола кĕртмелле.



Юлашкинчен райадминистраци пуçлăхĕ Л.Рафинов калаçăва пĕтĕмлетрĕ, ял çыннисен ыйтăвĕсене чăвашлах хуравларĕ /ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе танлаштарсан/, хулапа района кĕçех пĕрлештерессин кирлĕлĕхĕ пирки пĕлтерчĕ, хăйне тата администрацин ытти чиновникне Интернет урлă критиклекенсене сивлерĕ, ялти шкулăн проектне хатĕрлессин тата унăн строительствин ыйтăвĕпе хăй те ĕçлеме шантарчĕ. Çак кунсенче ял хуçалăх çĕрĕсене туянас тата 5000 га таран лаптăк çинче тыр-пул туса илес кăмăллă шведсем килнине палăртрĕ. Дискаторпа хăватлă трактор туяннă ĕнтĕ вĕсем, шампиньон производствине малтанхи хуçисем тепĕр хут чĕртсе тăратаççĕ, çул тума уйăрнă 2,4 млн тенке усă курманран, хăйсен укçи çитменрен каялла тавăрса пама тивнĕ. Пуçлăх республикăри ял-поселокра вырăнти общество хăй тытăмлăхĕсене йĕркелес турăм вăйланнине тата ку ĕçпе аппаланмаллине каларĕ.

Пухура туслăх çукки, пĕрпĕрне айăплама тăрăшни сисĕнчĕ. Ял çыннисен кăмăлсăрлăхне ăнланма йывăрах мар, анчах влаçсем халăха кўренни, çынсене чылай çылăхшăн айăплани /сăмакун сутаççĕ, йыттисене кăларса яраççĕ, сулăм укçи тўлемеççĕ, палăк çинче трафарет пичетлемеççĕ, субботниксене çўремеççĕ т.ыт.те/ – мĕне пĕлтерет-ха? Залрисем: «Пуçлăх халăхпа ĕçлемест», – терĕç.

Пуху нумайăшĕн кăмăлне каймарĕ: йĕркелўçĕсемшĕн каласса пултăр, ыран вара мĕн пулĕ? Нимĕн те, нимĕнле çутă пайăрки те çук, «Кеннет» фирмăн швечĕсене, «Синтез» фирмăн Мускав çыннисене, «Лизин» фирма голландецĕсене, Çĕмĕрле ютран килнĕ депутатне /«Топинамбур» фирма/, Китай çыннисене шанмалли юлать-ши?

Çĕмĕрле районĕ нумай енĕпе кая юлса пырать, район ертўлĕхĕн ытлашшипех тулнă пўлĕмĕсене кĕçех пĕтерĕç. Тен, район администрацийĕн аслă та опытлă, йышлă «эксперчĕсене» хăйсен бизнесне йĕркелемешкĕн ссудăсем памалла? Ĕçсем малашне те çакăн пекех пулсан ял тăрăхĕнчи виçĕ специалистăн та нимĕн тумалли те çук. Вăт ăçта вăл экономика перекетлĕхĕ?

Тен, Пĕтĕм тĕнчери хутăш «швед-çĕмĕрле префекчĕ» туса хумалла, Карлсонсемпе Хультсене пĕтĕм çĕре сутса е тара парса?

■ **Николай АДЕР**

«Терминалпа» çурт тăватпăр

Валюта çирĕпленет пулин те...

2-мĕш канаш

Çулталăк пуçламăшĕ доллар тата евро тĕлĕшпе тенкĕ тăруках «çăмăлланнипе» асра юлать-тĕр. Çак лару-тăрупа усă курма, хăйсен тенкисене долларпа улăштарма /паллах, пĕр 8% упраса хăварнă пулсан аванччĕ/ ĕлкĕрнисем нумайăн мар. Малтан ăна-кăна тавçăрса илеймен, кайран вара хыпăнса ўкни те кăлăхах. Çавăнпа та никамах та пăшăрханмарĕ пуль, мĕншĕн тесен экономикăшăн пĕтĕмĕшле илсен çак пулăмăн усси те пур.

Реклама

Калăпăр: маларах илнĕ кредитсем валюта çине куçарсан йўнелеççĕ, çĕршыври тавар туса кăларакансем чикĕ леш енчисем тĕлĕшпе конкурентлăрах пулаççĕ. Инфляци процесĕсене те çак лару-тăру пысăк витĕм кўмĕ. Чăн та, энергоносительсен тарифĕсем хальхи шайрах юлсан. Ку енĕпе вара шанăç пур – вĕсене тĕрĕслесе тăрассине тинех хĕрарăма шанса пама палăртаççĕ вĕт.

Ку сăмах май пултăр. Пайăр темăсене илес тĕк – унта ĕç-пуç тĕрлĕрен... Кăçал хăйсен çуртне çĕклеме палăртнă, çакăн валли кирлĕ чухлĕ укçа уйăрса хунă çынсене, паллах, чи малтанах стройматериалсен хакĕсем шухăшлаттараççĕ: вĕсем хăçан тата мĕн чухлĕ ўсме пултарĕç, çурт çĕкленĕ чухнехи тĕп тăкаксене паян мĕн никĕслет тата ыт.те? Тепĕр тесен «Терминалпа» çурт тăватпăр» рубрика тĕллевĕ шăпах çакă – ку енĕпе профессионалсен шухăшĕпе паллаштарасси. Вĕсен канашĕсем тĕрĕс йышăну тума пулăшасса шанатпăр.

Вăрттăнлăх мар: стена çĕклемелли строительство материалĕсен, уйрăмах кирпĕч тата газобетон хакĕсем строительство тапхăрĕ пуçланиччен те /çу уйăхĕн варриччен/, вăл хĕрсе çитнĕ вăхăтра та /утă уйăхĕнче/ ўсеççĕ – яланах çапла пулнă. Çулла материалсен дефицичĕ хаксене пушшех хăпартать, çакăнпа заводсем усă курма тăрăшаççĕ – хăймине сĕресшĕн. Апла пулин те 2014 çул урăхларах йĕркеленет: хакланасси маларах пуçланĕ – пуш уйăхĕнчех. Çакă долларпа евро тенкĕ тĕлĕшпе çирĕпленнипе сăлтавланать. Урăхла каласан производствăра валютăпа виçекен тăкаксем пулчĕç тĕк тенкĕпе шутласан вĕсем унченхинчен пысăкрах пулĕç. Юлашки вăхăтра рынока ют çĕр-шывсенчен кўнĕ оборудованипе ĕçлекен заводсем тухрĕç. Эппин, производствăра та тивĕçлĕ чĕр тавар кирлĕ – импорт сăрăсем, пигментсем тата ыт.те. Оборудование пăхса тăрасси те, саппас пайсем туянасси те – валютăпа. Çакă производствăри тăкаксене палăрмаллах витĕм кўрет – ўстерет.

Заводсем хальлĕхе тĕпрен илсен склад валли ĕçленине, хăй хаклăха шутланине тĕпе хурсан пуш уйăхĕнче суту-илў пуçланнă май хаксем пысăкрах пуласси куç кĕрет. Малтанхи кунсенче хаксене тўрлеткелеççĕ-ха – ўсĕм тĕрлĕ пулĕ, анчах, тепĕр хут палăртатпăр, хăймине сĕрме васкаççĕ – ку тĕллеве никам та пăрахăçламан.

Мĕн тумалла? – ĕмĕрхи ыйту. «Терминал» суту-илў комплексĕн Алькешри тĕп базин территорийĕнче тата республикăн тĕрлĕ районĕнчи пилĕк базинче кирпĕчпе газобетонăн пысăк саппасĕсене хатĕрлесе хуни çурт-йĕр тăвакансене укçа-тенке чылай перекетлес тĕллевпе вăхăтра йышăну тума май парать. Çавăнпа та пирĕн ансат сĕнĕве шута илни вырăнлă: **ЙЎНЕПЕ ТУЯН ТА – ТЎЛЕВСЁРЕХ УПРА!**

«Терминал» ТК базисен Чăваш Ен территорийĕнчи адресĕсем:

Шупашкар хули, Канаш çулĕ, 7/1; т. 8/8352/ 30-55-15;

Çĕнĕ Шупашкар хули, Промышленноç урамĕ, 41А; т. 8/8352/ 73-81-04;

Етĕрне хули, Сад урамĕ, 19А çурт; т. 8/83547/ 2-21-08;

Патăрьел ялĕ, Уй урамĕ /АБЗ территорийĕ/; т. 89871206685;

Çĕмĕрле хули, Б.Хмельницкий урамĕ, 71 çурт; т. 89279948851;

Улатăр хули, Çĕнтерĕве 40 çул урам, 83 çурт; т. 8/83531/ 6-14-35.

Сире «Терминал» суту-илў комплексĕнче çак адреспа кĕтетпĕр: ***Шупашкар хули, Канаш çулĕ, 7/1 çурт, Алькеш, «Терминал» ТК; тел. 8/8352/ 30-55-10, 30-55-15; www.terminaltk.ru.***

Тĕрĕслевсем тата çитменлĕхсем

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тĕрлĕ лару-канашлура ЧР Пуçлăхĕн Тĕрĕслев управленине ĕç тăвакан влаçсемпе муниципалитетсем бюджет укçи-тенкипе тухăçлă усă курни-курманнине тĕрĕслеме хушать. Мĕн тĕрĕслеме тивни тата должноçри çынсем хăш енĕпе ытлашшипех иртĕхнине çиеле кăларма май килни пирки управлени пуçлăхĕ Неонилла НИКИФОРОВА каласа кăтартать.

– Неонилла Ивановна, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн Тĕрĕслев управленийĕн пĕлтĕр ĕç нумай пулчĕ-и?

– Тĕрĕслев управленийĕн оперативлă тĕрĕслев, анализпа экспертиза уйрăмĕ 2013 çулта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ, ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертўçи хушнипе тĕрĕслевĕн 40 ытла мероприятине ирттернĕ. Çав шутра пай специалисчĕсем Чăваш Республикин патшалăх тата ĕç тăвакан влаç органĕсен ревизи ушкăнĕсен йышĕнче 6 тĕрĕслеве хутшăннă. Çак мероприятисен вăхăтĕнче бюджет укçи-тенкипе усă курнин саккунлăхне, тухăçлăхне тата юрăхлăхне, çавăн пекех социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕçе туянмалли хаксене тытса пынине тĕрĕсленĕ.

– Тĕрĕслевсен вăхăтĕнче мĕнле çитменлĕхсем тупса палăртрăр?

– Çитменлĕх чылай. Тĕслĕхрен: Элĕк, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Çĕнтĕрвăрри, Пăрачкав тата Шупашкар районĕсенче тăлăх ачасене пурăнмалли кĕтеспе вăхăтра тивĕçтерменнипе çыхăннă фактсем пуррине палăртнă. Сăлтавĕ – подряд организацийĕсем объектсене туса пĕтерессин вăхăтне тăсни. Таса мар чунлă подрядчиксен тĕлĕшпе мерăсем йышăннă. Вăйра тăракан саккунсемпе килĕшўллĕн тата Раççей ФАСĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн йышăнавĕпе «Стройгранд-Групп» ОООна – Шупашкар районĕнче çурт-йĕр тăвассипе ĕçлекен подрядчике /Ишек ял тăрăхĕ/ – таса мар чунлă поставщиксен реестрне кĕртнĕ. ЧР Экономика аталанăвĕн министерствин таса мар чунлă поставщиксен списокĕнче – «Мин-Строй» ООО, «Электрокомплект-1» ООО, «Стройкомлект» ООО.

Çапах çак йышăнава пăхмасăр вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем подрядчиксемпе тата поставщиксемпе – маларахри муниципалитет контракчĕсен условийĕсене лайăх пурнăçламаннисемпе – муниципалитет контракчĕсем тума чарăнмаççĕ. Тĕслĕхрен: эпир Йĕпреç районĕнчи ял тăрăхĕсем 2013 çулта тăлăх ачасем валли çурт-йĕр хăпартасси пирки «Стройкомплект» ОООпа контракт тунине тупса палăртрăмăр. Вырăнти влаçсем çав организаци Йĕпреç районĕнчех 2011-2012 çулсенче тунă муниципалитет контракчĕсем тăрăх тăлăх ачасем валли çурт е хваттер тумалли условисене пурнăçламаннине те шута илмен.

– Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев медицина тата вĕренў учрежденийĕсем валли туянакан апат-çимĕç хакĕсене çирĕп тĕрĕслесе тăмаллине тăтăшах аса илтерет. Ку сферăра чăнласах та çитменлĕхсем пур-и е Чăваш Ен Пуçлăхĕ çакна профилактика тĕллевĕпе – бюджет предприятийĕсен ертўçисем яваплăх пирки ан манччăр тесе – калать-и?

– Бюджет укçи-тенкипе тухăçлă усă курнине, тупăш кўрекен ĕç-хĕл укçи-тенкине – бюджет сферин учрежденийĕсем социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç туянма янăскерне – тĕрĕсленĕ май тĕлĕнмелле фактсем тупса палăртрăмăр.

Акă пĕлтĕрхи аван уйăхĕнче пахча çимĕçе /çĕр улми, купăста, кишĕр, сухан, хĕрлĕ кăшман/ сезон хакĕсенчен 2-3 хут пысăкрах хаксемпе туяннă. Çав вăхăтрах Шупашкар хулин шкул уменхи учрежденийĕсем услам çупа ĕне ашне потребитель рынокĕнчи хаксен 60% танлашакан хаксемпе туяннă. Шкул уменхи учрежденисенче апатланассине йĕркелемелли çимĕççен пахалăхĕн требованийĕсемпе килĕшўллĕн торгсене йĕркелекенсен, паллах, ыйту çуралмалла пулнă: мĕншĕн-ха пахалăхлă апат-çимĕçе рынокринчен йўнĕрех хакпа кўрсе килеççĕ? Анчах темшĕн çак ыйту çуралман.

Унсăр пуçне бюджет сферин учрежденийĕсем туянакан социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕçĕн 82,8% /туянусен пĕтĕмĕшле калăпăшĕнчен/ Чăваш Республикин территорийĕнче туса кăларнă. Çав хушăрах Чăваш Республикинче туса илнĕ услам çупа кайăк-кĕшĕк ашĕн тўпи 3,5 хут пĕчĕкрех пулнă: 24,2% çеç. Чăваш Енре ку çимĕççене кăларма чарăннă-им вара?

Тĕрĕслевсен пĕтĕмлетĕвĕсем пирки калакан информацие Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тата ĕç тăвакан влаç органĕсен ертўçисем патне оперативлă йышăнусем тумашкăн çитернĕ.

– Интернетра çынсем нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсенче асфальта начар сарни пирки ўпкелешсе тăтăшах çыраççĕ. Ку чăнласах та çапла-и е сас-хура çеç-и?

– Ку ыйтăва эпĕ пĕр енлĕн çеç хуравлаймастăп. Çын çырнипе килĕшес е ăна хирĕçлес тесен çак тĕслĕхе тĕплĕн тĕрĕслемелле.

Çав вăхăтрах эпĕ çынсем строительсем йĕркене пăсни пирки ўпкелешсе сăлтавсăрах çырмаççĕ тесе çирĕплетме пултаратăп. Республика бюджечĕн укçи-тенкипе муниципалитет йĕркеленĕвĕсене картишсен территорийĕсене тата вĕсем патне пымалли çулсене юсамашкăн уйăрнипе, мĕнле усă курнине тĕрĕслесен çакна тупса палăртнă: муниципалитет саккасçисем пурнăçланă ĕçсен пахалăхне тĕрĕслемелли механизмсемпе – усă курнă материалсен тата сарнă асфальт-бетон сийĕн пахалăхĕн лаборатори тĕрĕслевĕпе – туллин усă курмаççĕ иккен. ЧР Строй-миненĕ «Чăвашупрдор» хысна учрежденийĕн куçса çўрекен лабораторийĕ хăш-пĕр хулара, районсенчи темиçе ялта ирттернĕ тĕрĕслевсем асфальт сийĕ ГОСТсемпе СНиПсен требованийĕсене тивĕçтерменнине палăртнă. ЧР Транспорт министерстви район-хула администрацийĕсен пуçлăхĕсене çак çитменлĕхсене пĕтермелли пирки предписанисем ярса панă. Вĕсене çавăн пекех муниципалитет контракчĕсене çул-йĕрĕн хытарнă сийĕн пахалăхĕн лаборатори тĕрĕслевĕсене обязательнăй мелпе ирттерессине кĕртмешкĕн сĕннĕ.

Пулăм

Чăваш Енре – цифра телекуравĕ

Нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Енре халăха цифра телекуравĕн ыйтăвĕсемпе консультаци пулăшăвĕ паракан центр уçалчĕ. Çавăн пекех республикăра DVB-T2 стандартлă эфир цифра телекуравне тест режимĕпе хута ячĕç.

Мероприятие ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕн çумĕ Алексей Новиков, «Раççей телекуравпа радиохыпарлав сечĕ» /РТРС/ ФПУП филиалĕн «Чăваш Республикин радиотелекурав передача центрĕн» директорĕ Дмитрий Авербах, сумлă ытти хăна хутшăнчĕç. Çўлерех асăннă центр Шупашкарта Радио çуртĕнче /Николаев космонавт урамĕ, 4 çурт/ вырнаçнă.

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕр-шывра DVB стандартлă цифра телекуравне ĕçе кĕртесси вăй илсех пырать. 2009 çулта РФ Правительствин йышăнавĕпе федерацин «Раççей Федерацийĕнчи телерадиохыпарлав аталанăвĕ 2009-2015 çулсем валли» тĕллевлĕ программине йышăннă. Унта телерадиохыпарлавăн патшалăх сечĕсен инфратытăмне çĕнетмеллине, вĕсене цифра технологийĕсем çине куçармаллине, пур çĕрте те регион цифра хыпарлавĕ валли майсем туса памаллине палăртнă. Малтанласа Раççейре цифра эфир хыпарлавне DVB-T2 стандарт çине 2015 çул тĕлне куçармашкăн планланă. РФ Правительствин 2012 çулхи пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 287-р №-лĕ йышăнавĕпе килĕшўллĕн пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе пурнăçа кĕртмелли вăхăта 2012-2013 çулсем çине куçарнă. Тĕллевлĕ программăн малтанхи тапхăрĕ – цифра телекуравĕн пĕрремĕш федераци пакетне /мультиплексне/ трансляцилеме майсем йĕркелесси. Унта «Пĕрремĕш канал», «Раççей 1», «Раççей 2», «НТВ», «Петербург Пиллĕкмĕш канал», «Раççей Культура», «Раççей 24», «Раççейĕн Общество телекуравĕ», «ТВ Центр» тата «Карусель», çавăн пекех «Маяк», «Раççей радиовĕ», «ФМ хыпарĕсем» радиостанцисем кĕреççĕ. РТРС-2 пакетра 9 телеканал пулĕ. Регионсен телеканалĕсене виççĕмĕш мультиплекса кĕртме йышăннă.

Чăваш Ен пирки калас тăк 2013 çул вĕçĕнче цифра телекуравне пуçласа виçĕ пунктра – Шупашкарпа Канаш хулисенче тата Тăвай ялĕнче – тест режимĕнче курма май килнĕ. Паянхи кун 500 пине яхăн çын /ку вăл – республикăра пурăнакансен 40%/ цифра телекуравĕн пахалăхне тивĕçлипе хаклама пултарать. РТРС çывăх вăхăтра Çĕрпў хулипе Йĕпреç поселокĕнче цифра эфир телекуравĕн объекчĕсене ĕçе кĕртме хатĕрленет. 2014 çулта телекуравăн тепĕр 15 передатчикне хута яма планлаççĕ. Çапла вара цифра телекуравне 1070,3 пин çын е Чăваш Енре пурăнакансен 82,1% пăхма пултарать, чи пĕлтерĕшли – тўлевсĕрех.

Хĕрлĕ хăйăва касса центра уçсан, эфир цифра телекуравне ĕçлеттерсе ярсан Дмитрий Авербах: «Паянхи пулăм – Чăваш Ен телехыпарлавĕн хальхи технологийĕсен аталанăвĕнчи çĕнĕ страница», – терĕ. Мероприятире DVB-T2 стандартлă телекурав еплерех ĕçленине курма май килчĕ. Специалистсем палăртнă пекех – «вăл лайăхрах, пахалăхлăрах», телеэкранри ўкерчĕксем уççăнрах курăнаççĕ, тĕссем те улшăнса каймаççĕ. Унтах цифра телекуравĕ çине мĕнле куçмаллине те ăнлантарса пачĕç. Çакăн валли дециметр диапазонлă антенна кирлĕ. Ăна телевизорпа çыхăнтарсан цифра телеканалĕсен автошыраве ямалла. Çапла тума май килмесен DVB-T2 стандартлă приставка туянмалла.

Консультаци пулăшăвĕн центрĕнче кирек кам та цифра телекуравĕн мелĕсем тата унăн программисене йышăнмалли меслетсем пирки тулли информаци тўлевсĕрех илме пултарать. Унсăр пуçне специалистсем районсене тухса презентацисем ирттересшĕн. Цифра сечĕпе çыхăнмалли ыйтусене «хĕрў лини» телефонĕпе **/8-800-220-20-02/** шăнкăравласа уçăмлатма пулать. *ртрс.рф* порталта та кирлĕ информацие тупма май килет.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Кино ăстисем чăмăртаннă

ЧР патшалăх электрон, кинодокументаци архивĕнче чăваш кинематографисчĕсен пĕрремĕш йĕркелў пухăвĕ иртнĕ.

Ун ĕçне «SuvarTV» Интернет телевидеокомпани директорĕ Олег Цыпленков, «КоЮр» киновидео пĕрлешў ертўçисем Константин Ефремовпа Юрий Сергеев, «Салам» ООО ертўçисем Елизавета Разумовăпа Владимир Карсаков, «Диал» /AKSAR STUDIO/ ООО представителĕ Иван Иванов, «ОРИОН» видеостуди директорĕ Вячеслав Оринов, «ILTIMER STUDIO» видеостуди ертўçи Алексей Ефремов тата ЧР Патшалăх электрон, кинодокументаци архивĕн ĕçченĕсем хутшăннă.

Кун йĕркинче пысăк икĕ ыйту пулнă. Пĕрремĕшĕ наци фильмĕсене ўкерес тĕлĕшпе федераци программине хутшăнса субсиди илессипе çыхăннă. Асăннă ыйтупа архив ĕçченĕ Алексей Ефремов сăмах илнĕ.

Иккĕмĕшĕ: ЧР Кинематографистсен союзне туса хурасси çинчен. Ун пирки Олег Цыпленков тухса каласнă. Пухăва хутшăннисем сĕнĕве ырласа йышăннă.

Пухура чарăнса тăнă тепĕр самант акă мĕнпе çыхăннă: кăçалхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче «Кино- тата фотопромышленноçа национализацилесси çинчен» Декрета йышăннăранпа /ăна В.Ленин алă пуснă/ 95 çул çитет. Çак пулăм Раççей Кино кунне «симĕс çутă» панă. Республикăра наци кино ĕçĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче аталанса вăй илнĕ. Вăл халĕ те тăван культурăн чи пĕлтерĕшлĕ паллисенчен пĕри. Чăваш кинематограф аталанăвăн ыйтăвĕсене кăçалхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче ЧР патшалăх электрон, кинодокументаци архивĕнче иртекен «Хальхи вăхăтри кинематограф: аталанăвăн çĕнĕ çулĕсем» «çавра сĕтелре» сўтсе явĕç.

● *Пухăва хутшăннисем.*

■ **Надежда СМИРНОВА**

Ас тăвăм

Литература музейĕн пĕрремĕш ертӳçи

Иван Ивник ячĕ тăван литературăра иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче илтĕнсе кайнă. Вăл фельетонсемпе пĕчĕк калавсенчен пуçланă. Пĕрремĕш хайлавĕсем «Капкăн» журналта кун çути курнă. Каярахпа тĕрлĕ хаçат-журналта сăввисем те тăтăшах пичетленнĕ.

Иван Николаевич Ивник 1914 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Çавалкасси Мăрат ялĕнче çуралнă. Пулас сăвăç ялти шкултан вĕренсе тухсан 1928-1931 çулсенче Шупашкарти педагогика техникумĕнче ăс пухнă. Çавăн чухнех вăл чăвашсен паллă çыравçисемпе паллашса туслашнă. Кун кĕнекинче çапла çырнă: «1928 çул уçăмлă çулталăк пулса тăчĕ. Пĕчĕк калавсем, сăвăсем çырма тытăнтăм. Шупашкарти пĕтĕм хаçата корреспондент шутланса тăратăп».

И.Ивник уйрăмах «Капкăн» журналпа тачă çыхăну тытнă. Çамрăк автор 1928-1929 çулсенче чăваш хресченĕн ăсхакăлĕнчи çитменлĕхе асăрханă. Ерехпе ашкăннине, наянлăха, вĕçкĕнлĕхе питлесе çырнă. Çак вăхăтри хайлавсен йышĕнче – «Урнă Кĕркури», «Павел Черкинăн телейлĕ кунĕсемпе хуйхăллă кунĕсем», «Пилĕк пуху» фельетонсем, «Лăкăштăкпа Унтри пиччĕ», «Урине» калавĕсем, «Çур аки умĕн», «Çăварни», «Сăмакуна пула» тата ытти сăвă. Сăвăç пултарулăхĕнче ытларах лирика палăрать. Çак вăхăтра вăл сăвă-юрă çырма пуçлать.

Сывлăхĕ хавшанăран 1931 çулта тăван ялне таврăннă. Пĕр вăхăт сипленнĕ хыççăн И.Ивник Самарти «Колхозник» хаçата ĕçе вырнаçнă. Сăвăç чăваш лирикине тĕпченĕ, урăх çĕр-шывсенчи лириксен пултарулăхĕпе паллашнă, тĕнче классикĕсен асамлă вăрттăнлăхĕсене пĕлме тăрăшнă.

1932 çулта Хусанти Совет прави институтне вĕренме кĕнĕ. Çак вăхăтрах литература ĕçне те пăрахман. Хусанти «Утăм» альманахпа çыхăну тытнă. 1933 çулта Иван Ивник яланлăхах Шупашкара кӳçса килнĕ. 1933 – 1934 çулсенче Раççей телеграф агентствин Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ялсемпе хуласене ятарласа тухса çӳрекен корреспондентĕнче ĕçленĕ. Çак вăхăтра вăл чăваш халăхĕн сăвви-юррипе халапĕсене пухас тата вĕсене тĕпчес тĕлĕшпе нумай тăрăшнă.

Иван Николаевич темиçе çул «Колхоз ялавĕ» хаçатра тата ЧАССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи наука тĕпчев институтĕнче вăй хунă. 1939 çул пуçламăшĕнче профессионал сăвăç пулса тăнă. Вăл çырнă сăвăсем, критика статйисем тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленнĕ. Ку тапхăрта Иван Ивник питĕ тухăçлă ĕçленĕ. Унăн чи паллă хайлавĕсем – «Павлик Морозов», «Чемей пăлхавĕ» поэмăсем тата «Телей çулĕ» сăвăлла юмах. А.Пушкин, М.Лермонтов, М.Горький, В.Маяковский, С.Есенин ĕçĕсене чăвашла куçарса пичетленĕ.

Пултаруллă сăвăç чăваш литературинче ытларах лирика хайлавĕсемпе палăрнă. Унăн сăввисем çепĕç кĕвĕллĕ, чылайăшне юрра хывнă. «Ирхи Атăл», «Пĕрле ӳснĕ тантăшсем», «Хĕвелĕмĕр», «Улма йывăç авăнать», «Çурхи хаваслăх» тата ытти те.

Иван Ивник пурнăçĕн юлашки çулĕсем питĕ тертлĕ иртнĕ. Сывлăхĕ хавшанине пăхмасăрах сăвăç пĕр хушă К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕн ертӳçинче ĕçленĕ. 1940 çулхи юпа уйăхĕнче ĕçе йĕркелесе янă. Чăваш литературипе тата культурипе çыхăннă материалсене пухма пуçланă. Чăваш наци музейĕн фондĕнче унпа çыхăннă материалсем упранаççĕ. Экспозицире пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан экспонатсем пур: кĕнекесем, ал çырăвĕсем, сăн ӳкерчĕксем, тĕрлĕ документ.

Каярахпа Иван Ивник Чăваш АССР Писательсен союзĕнче литература консультантĕнче ĕçленĕ. Тем пек йывăр саманта та вăл ĕмĕтленме, çырма пăрахман, сăвви-юрри халăхра ĕмĕр пурăнасса шаннă.

Ахăртнех, эп вилсе
выртас тăк
Чип-чипер çӳренĕ хушăрах, –
Ан кулянăр, ан тăвăр
пĕр сас та!..

Хăратмасть чăрсăр вилĕм
мана, –

тет вăл пĕр сăввинче.

И.Ивник йывăр чире пула 1942 çулхи çу уйăхĕнче вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Юлашки кунĕсенче хăйĕн архивне йĕркеленĕ, çырнисене пухса уйрăм тетрадьсем тунă. Пултаруллă сăвăçăн ĕмĕчĕсем пысăк пулнă.

Нарăс уйăхĕн 27-мĕшĕнче Иван Ивник çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Унăн янăравлă та çепĕç сăвви-юрри халăх асĕнче ĕмĕр упранĕ.

■ **Ирина ОЛЕНКИНА,**
К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕн ертӳçи

Электрон вулавăш пуянланать

Наци библиотеки Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунĕ тĕлне чăваш чĕлхин революцичěнхи тĕпчевĕсен тата чăвашла тухнă кăларăмсен электрон пуххине хатĕрленĕ. Кĕнекесене pdf форматра вулавăш сайтĕнче вырнаçтарнă. Ун пирки "Цифра форматĕнчи библиотека" блогра тĕплĕнрех çырса кăтартнă.

Наци библиотекин фондĕнче электрон ресурса кĕнĕ мĕн пур кăларăмăн пичет е элетрон версийĕ упранать. Чылайăшне учреждени ĕçченĕсем цифра çине куçарнă, хăш-пĕр кĕнекен Google маркировка /çак проектпа килĕшӳллĕн пурнăçланине кăтартать ахăртнех/ пур.

Библиотека сайтне паллă ăсчахăн, чăваш чĕлхи тĕпчевçин Н.Ашмаринăн ĕçĕсене – "Словарь чувашского языка", "Программа для составления чувашкого словаря", "Опыт исследования чувашского синтаксиса" – вырнаçтарнă. Çавăн пекех В.Вишневскин, Н.Золотницкин, XIX ĕмĕрти ытти тĕпчевçĕн ĕçĕсене вырăн панă. Электрон вулавăшра XIX – XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш шкулĕсем валли хатĕрленĕ вĕренӳ литературипе, вырăс классикĕсен А.Пушкинăн, Ю.Лермонтовăн, Н.Гоголĕн чăвашла куçарнă произведенийĕсемпе паллашма пулать.

Кирлĕ кăларăма тупас тесен учреждени сайтĕнче регистрациленмелле, унтан электрон каталогăн шырав тытăмĕпе усă курмалла. Наци библиотеки уяв пуххине кĕртнĕ кăларăмсемпе çеç çырлахасшăн мар. Чăваш кĕнекисен электрон фончĕ пуянлансах пырĕ.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

Пĕтĕмлетӳ

Раççей спорчĕн сумне çĕкленĕ

«Олимпиадăри çитĕнӳсем пире тăван çĕр-шывăмăрпа, унăн хăвачĕпе мăнаçланма май пачĕç», – тенĕ РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич XXII хĕллехи Олимп вăйăйисене пĕтĕмлетнĕ май ирттернĕ канашлура. Олимпиадăра Раççейшĕн Атăлçи округĕнчи 13 спортсмен ăнăçлă ăмăртнă, наградăсен пухмачне 19 медаль хывнă: 6 – «ылтăн», 10 – «кĕмĕл», 3 – «бронза. Мордва Республикинчи Александр Зубков бобслеист Раççейĕн пĕрлештернĕ командин ялавне çĕклесе пыма тивĕçнĕ. Вăл Олимп чемпионĕн ятне икĕ хут тивĕçнĕ.

Атăлçи округĕн спортсменĕсем – Максим Траньков фигурист /Татьяна Волосожарпа пĕрле мăшăрăн ярăнса/ икĕ «ылтăн», Семен Елистратовпа Руслан Захаров /шорт-трек/, Пушкăртстан икшер «кĕмĕл», Никита Крюков йĕлтĕрçĕ /Пушкăртстан/ икĕ «кĕмĕл», çунашкапа ярăнса ăмăртакан Альберт Демченко /Пермь крайĕ/ икĕ «кĕмĕл», Александр Смышляев могулист /Пермь крайĕ/ пăхăр медаль çĕнсе илсе Раççей спорчĕн сумне çĕкленĕ.

Удмурт Республики Олимп вăйăйисен икĕ призерне хатĕрленĕ: Максим Вылегжанин йĕлтĕрçĕн 3 кĕмĕл медаль /командăпа ăмăртса, 4 х 10 км эстафетăра, 50 километрлă масстартра/. Унăн ентешĕ Дмитрий Япаров та йĕлтĕрçĕсен эстафетинче кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Киров хулинче çуралса ӳснĕ Екатерина Шаховăн /коньки-пе чупасси/ та «кĕмĕл».

● *Н.Крюковпа М.Вылегжанин.*

Нарăсăн 24-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин XXII хĕллехи Олимп вăйăйисен чемпионĕсемпе призерĕсене патшалăх наградисем панă.

■ **А.СТЕПНОВ**

Манмастпăр

Ентеш ячĕпе – турнир

● *Ăмăрту вăхăтĕнче.*

Елчĕк районĕнчи Яманчӳрел ялĕн вулавăшĕнче çуллен вунвун мероприяти иртет. Вĕсенчен пĕри – кунта пурăнакансенчен пурне те канăçсăрлантараканни – ентешĕ Александр Муллин ячĕпе йĕркелекен спорт турнирĕ. Вулавăш ертӳçи, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ираида Ермакова пуçарăвĕпе 2008 çултанпа пурнăçланса пырать вăл.

Кăçалхи ăмăртусене Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçи кунĕнче йĕркелерĕç. Яманчӳрелти, Шăмалакри, Лаш Таяпари, Аслă Елчĕкри, Тӳскелти тата Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăри шкул ачисем, ял ĕçченĕсем йĕлтĕр эстафетине хутшăнчĕç. Арçын ачасем хоккейла вылярĕç, кăмăллакансем шашка тата армспорт енĕпе тупăшрĕç, чи кĕçĕннисем тăвайккинчен ярăнчĕç. Турнира хутшăннисене республикăри «Доблесть» обществăн ертӳçи Владимир Яковлев, Лаш Таяпа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Светлана Ермакова, «Яманчӳрел» ООО директорĕ Владимир Рахмуллин, спорт ветеранĕ, Афган вăрçине хутшăннă Юрий Павлов тата Чечня вăрçинче пулнă Владимир Павлов саламларĕç.

Ун умĕн кăшт маларах Ираида Петровна вулавăшра паттăрлăх урокĕ ирттерчĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекенсемпе Александр Архиповăн «Пĕчĕк партизан» кĕнекине вуларĕç. Ун хыççăн библиотекарь Афган, Чечня вăрçисем пирки сăмах пуçарчĕ, «Живи и помни» кĕнекепе паллаштарчĕ. Унăн 184-мĕш страницинче Яманчӳрел каччи Александр Муллин çинчен çырса кăтартнă. Саша 2000 çулхи кăрлач уйăхĕнче Грозный хулинче пуç хунă. Çапăçури паттăрлăхпа хăюлăхшăн ăна вилнĕ хыççăн Паттăрлăх орденĕпе наградăланă.

Ираида Петровна «Пирĕн ентеш – Александр Муллин» слайдăн презентацине ирттерчĕ, «Чечня–Афганистан» слайд вара ачасене ашшĕсен çарти тапхăрĕпе – Чечня тата Афган вăрçисенче пулнă самантпа – паллаштарчĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Шухăш

Нихăш вăхăтра та кун пекки пулман

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче васкаса юр ирĕлнипе пĕрлех культура ĕçченĕн кунне паллă тăватпăр. Тăван республикăн культура отраслне ултă театр, виçĕ концерт организацийĕ, патшалăх, муниципалитетсемпе ял тăрăхĕсен музейĕсем, 554 библиотека, 817 культура учрежденийĕ, музыкăпа искусствăн 48 шкулĕ, вĕрентĕвĕн тăватă учрежденийĕ кĕреççĕ. Чимĕр-ха, писательсен те пулмалла мар-и-ха культура тытăмĕнче?

Совет Союзĕ арканиччен Аслă Канашра икĕ-виçĕ депутат пуçне пĕр писатель тиветчĕ. Халĕ Раççей парламентĕнче те, хамăрăн Патшалăх Канашĕнче те çыравçăсем çук. Писатель профессине реестртан кăларнă. Яланах халăх чысĕ, совеçĕ, мухтавĕ шутланнă çынсем правасăр, сумсăр, кĕлмĕç пулса юлчĕç. Вĕсем пултарулăх интеллигенцийĕн малта пыракан отрячĕ пулнă, наци культура элитин тытăмне кĕнĕ. Халĕ ку ушкăна салатса янă, тытăмне сӳтсе пăрахнă. Укçасăр çынна кам элита тетĕр ĕнтĕ?

Иртнĕ вăхăтра «литературăпа» «искусство» сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрман. Илемлĕ произведени искусствăн мĕн пур тĕслĕхĕн никĕсĕ пулса тăрать. Либреттăсăр балет музыки çырăнмасть. В.Ходяшевăн чунĕнче пулас балетăн кĕвви çуралнăччĕ. Ячĕ те тупăннăччĕ. Хĕрсе ĕçе пуçăнма либретто кирлĕччĕ. Ăна çырма килĕшекен тупăнмарĕ те – композитор чунĕнче çуралнă кĕвĕ унтах юлчĕ. «Мĕн каласа юрлам-ши?» – тени ыт ахальтен çуралман. Кирек мĕнле юрăра сăмах тĕп вырăн йышăнать.

Мускав хаçат-журналĕнче культура ячĕпе каласакансем – кино режиссерĕсем, артистсем, сцена ăстисем, шоу-бизнес çыннисем. Теплере пĕрре Д.Гранина, А.Дементьева, Ю.Полякова сăмах паркалаççĕ. Статьясен айне писатель тесе çыракан тата ик-виçĕ çын пур. «Культура» телеканал литература программисене эфира тахçанах кăлармасть. Раççей радиоканалĕпе вырсарни кунсенче «Поэзи» рубрикăпа темиçе сăвă ирсерен вулаççĕ.

«Театрсăр наци çук, театр – чĕрĕ сăмах» тесе калакансене чарассăм килет. Илемлĕ литературăсăр театр пулмасть. Литературăсăр наци пĕтет. Театр чĕрĕ сăмахран пуçланать. В.Шекспир, А.Чехов, П.Осипов хайлавĕсене çырман тăк – çав драмăсенче вылянă артистсем те пирĕн асăмăрта тăрса юлаймĕччĕç. Апла культура тытăмĕнче театр пулмалла тенĕ чухне писательсене мĕншĕн айккине тĕртетĕрте хăвармалла?

«Искусство» сăмах паян чăн-чăн пĕлтерĕшне çухатнă. Илемлĕ сăнар урлă пурнăçа кăтартса паракан искусство халĕ йăпанчăка çаврăннă. РФ Президенчĕн çумĕнчи Культурăпа искусство канашĕн пĕр ларăвĕнче В.Путин çапла каланăччĕ: «Культурăна йăпанчăк вырăнне хума хăнăхнине пĕтерме çăмăлах пулмĕ, анчах ăна тумаллах. Культура политикин те çакна тума тăрăшмалла, унăнах культурăна тивĕçлĕ шая çĕклеме пулăшмалла».

Совет тапхăрĕнче центрта та, республикăсенче те Культура министерствисен çумĕнче «худсоветсем» пулнă. Мĕнле кăна сăмахпа вăрçмаççĕ халĕ вĕсене? Пĕрисене хисеплĕ ят илме чăрмантарнă, теприсене илес килнĕ чухлĕ укçа илме чарнă. Кирек мĕнле ĕçре те çитменлĕх пулатех. Эпĕ вĕсен ĕçне тӳрременех хутшăнман. Писательсен союзĕнче литература консультанчĕ пулнă чухне худсоветра пăхса тухма тăратнă юрăсен сăмахĕсене хак пама тӳр килнĕ. Юрăсен сăмахĕсене якатса çитерме сахал мар пулăшнă. Композиторсен союзĕн консультанчĕсем кĕвве-çемме хак паратчĕç. Ун чухне юрлатăп тесе çăвар каракансене, ташлатăп тесе силленекенсене пурне те сцена çине хăпартман, радиопа телеэфира кăларман. Юрă-кĕвĕ хывакана та, композитор пулсан та, концертсене хутшăнма ирĕк паман. Вокал ăсталăхĕ кирлĕ пулнă. Чăваш Республикинчи композиторсенчен А.Михайловăн кăна çавăн пек ирĕк пулнă.

Художество /ӳнер/ канашĕсен ĕçĕнче ним начарри те курмастăп. Ун чухне çуралнă юрăсем паян пурте халăхра пурăнаççĕ. Кирек мĕнле искусство произведенине те халăх çине кăлариччен ăстасен хак памаллах. Çавна туманнипе ĕнтĕ чиркӳсенчи амвон пекех таса вырăн пулмалли сцена намăс-симĕсе уяма пăрахрĕ. Эфир «попсапа» тулса ларчĕ. «Юрă – халăх чунĕ» тетпĕр пулсан патшалăхăн çав чуна хăй хӳттине илмеллех. Литературăна та сиктерсе хăварма юрамасть. Акă мĕншĕн литературăпа искусствăна пĕрпĕринчен уйăрса калама тытăнтăмăр иккен.

Пирĕн çĕр-шыва вăл та, ку та кирлĕ мар. Сергей Михалков вырăс литератури патшăлăх хӳттинче пулмалли çинчен калатчĕ. Ăслăлăх кĕнекисенче «культура тытăмне хăй еккипе ярсан хăй хыççăн пуш хир хăварать» тесе çырнисем те пур. Наци литератури патшалăх пулăшăвĕсĕр пурăнайманни паллă ĕнтĕ. Чăваш Республики, çĕр-шыври вăтам кăтартупа танлаштарсан, кĕнеке 10 хут сахалрах кăларать. Чăваш писателĕсем хăйсен укçипе /е спонсорăннипе/ кăларнă кĕнекесем вулакан патне çитеймеççĕ. Пĕчĕк тиражпа пичетленĕскерсене ал çывăрĕ вырăнне кăна шутлаççĕ. Вĕсем кăкăр çапса мăнаçланмалли сăлтав пулаймаççĕ.

Халăх культурине илемлĕ литература аталанăвне пăхса хаклатпăр. РФ Президенчĕ В.Путин юлашки вăхăтра вырăс литературине шкулта ытларах вĕрентмелле тесе ас тутарсан тăрать. Апла вăл та кирлĕ патшалăха. Эпир пурте гуманитари хутлăхĕнче этем пулса çитĕнетпĕр. Илемлĕ литература – чун апачĕ. Вăл чунăмăрсене тутă усрать кăна мар, тулăхлантарса пырать.

Гуманитари хутлăхĕн тепĕр паха енĕ – истори – пирĕнтен чăн-чăн граждансем, патриотсем тăвать. Çак интеллект пурлăхĕ кама кирлĕ мар пулчĕ-ши? Мĕн сăлтавпа илемлĕ литературăна пурнăç çулĕ çинчен пăрчĕç? Писателе – халăх чысĕпе совеçне, чапĕпе мухтавне – кĕлмĕç, сумсăр çын туса хучĕç. Çын правин уполномоченнăйĕсем тĕрмере ларакансен прависем çинчен каçса кайсах калаçаççĕ. Ӳсĕр çапкаланчăксене пулăшакан темле общество организацийĕ те пур. Халĕ тата предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйсем турĕç. Предприниматель профессийĕ пур тăк мĕншĕн писатель профессине хуратса хумаллаччĕ? Мĕншĕн ăна хӳтĕлекен уполномоченнăй çук?

Неолиберал çĕнĕ пуян чунлă граждансем кирлĕ мар. Çавăнпах совет влаçĕ вăхăтĕнче министерство шайĕнчех пулнă союза сăра юратакансен клубĕпе юнашар антарса лартрĕç. Халĕ Писательсен союзĕ çыравçă хутне кĕрсе нимĕн те тăваймасть. Нихăш вăхăтра та писатель кунашкал мăшкăл курман. Выçлăх çулĕсенче те, вăрçă вăхăтĕнче те писателе ĕçшĕн тивĕçлĕ тӳленĕ.

Писателĕн пĕртен пĕр хĕç-пăшалĕ – сăмах. Унăн сăмахне халăх ун чухне кăна мар, паян та саккун вырăннех йышăнать. Вĕсене çăвар хуптарма писательсен пултарулăх тытăмне салатса ячĕç, сумсăра кăларчĕç. Культура çулталăкĕнче илемлĕ литературăна ĕмĕрхи вырăнне тавăрса памаллах.

■ **Денис ГОРДЕЕВ,**
Чăваш халăх писателĕ

Чăвашстат хыпарлать

Мĕнлерех вăл – паянхи арçын?

Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ умĕн статистиксем Раççей халăхĕн 2010 çулхи çыравĕн кăтартăвĕсене тĕпе хурса Чăваш Енĕн вăтам арçыннин сăнне уçăмлатма шухăшларĕç. Мĕнлерех вăл?

Тӳрех палăртмалла: пирĕн республикăри арсем хăйсемпе интереслентерме пултараççĕ: кашни 1000-шĕ пуçне 1148 хĕрарăм тивет. Вĕсен йышĕ 579 пинпе е халăхăн 47 процентĕнпе танлашать. Пысăк пайĕ /58 процент/ – хула çынни, чи йышли – вăй питти ӳсĕмрисем /390 пинĕн е 67 процент/, чи сахалли – ĕçлеме пултараслăх ӳсĕмĕнчен аслăраххисем, унашкаллисем 78 пинĕн /14 процент/.

Статистикăн вăтам кăтартăвĕпе хаклакан паянхи арçын 36 çулта. Хулара пурăнаканни тата çамрăкрах: 35-ре, ялта тĕпленни вара 38-та. Сăмах май, унăн вăтам ӳсĕмĕ хĕрарăмран 5 çул кĕçĕнрех. Çакна вĕсен ĕмĕрĕн тăсăмĕ 13 çула яхăн уйрăлса тăнипе сăлтавламалла: пĕрремĕшĕсем вăтамран – 64, иккĕмĕшĕсем 77 çулччен пурăнаççĕ. Нацилĕхе илес тĕк пĕрремĕш вырăна тĕп халăх çыннисем – чăвашсем йышăнаççĕ /381 пин е 68 процент/, иккĕмĕшсем – вырăссем, 147 пинĕн. Наци тытăмĕ малалла çапла йĕркеленет: тутарсем /17 пин/, мордвасем /6 пин/, украинсем /2 пин/, марисем /1 пин ытларах/.

Çитĕннĕ арсен 63 процентĕ çемьеллĕ, саккун йĕркипе уйрăлнисем – 5, уйрăлса кайнисем – 1, урçасем 4 процент. Пĕрремĕш хут мăшăрланакан каччăн вăтам ӳсĕмĕ 27 çулпа танлашать, иккĕмĕш хут çемье çавăраканнин – 40-пе. Республикăра пурăнакан арçынсенчен чылайăшĕ 25-29 çулсенче авланать. Уйрăлакансем те асăннă ӳсĕмрисен хушшинче нумайрах. Хулара пурăнакансен йышĕнче çемьене аркатакансем ытларах. Ывăл-хĕрне воспитани парассине илес тĕк ачисене амăшĕсĕр пăхса çитĕнтерес тĕллевлисем сахал – унашкаллисем 3 пинрен ытларах кăна. Чăваш Енре пурăнакан пĕччен ашшĕсен пысăк пайĕ 1-шер ача çитĕнтерет, 562-шĕ – 2-шер, 71-шĕ 3 тата ытларах.

Çакна та палăртмалла: вĕренӳ шайĕпе арçынсем хĕрарăмсенчен кайра пыраççĕ: пĕрремĕшĕсен йышĕ – 17, иккĕмĕшĕсен – 22 процент. Ăслăлăх кандидачĕсемпе докторĕсене илес тĕк арсем ирттереççĕ – 72 процент /хĕрарăмсем – 53/.

Арçынсен экономикăри пуçарулăхĕ 72 процентпа танлашать, вĕсенчен 89 проценчĕ республика экономикин тĕрлĕ тытăмĕнче вăй хурать.

Финанс тĕлĕшĕнчен тăнăçлă шутланакан тупăш çăл куçĕ миçе кирлине кашни ар хăйне май палăртать. Вĕсен 67 проценчĕ пĕррепе çырлахать, 31 – иккĕпе, 2-шĕ – виççĕпе. Чи пуçаруллисемпе ăнăçлисен вара /унашкаллисем 0,1 процент е 228 çын/ тупăш çăл куçĕн шучĕ те çук. Хăш-пĕр аршăн хисепĕ мар, тупăшлăхĕ пĕлтерĕшлĕ, çавна май вĕсем пысăк шалу шыраса республика тулашне – Мускав хулипе облаçне – тухса каяççĕ. Ытти регионта ĕçлекенсем пĕтĕм йышăн 82 проценчĕ чухлĕ, вĕсен çуррийĕ ытла – ялта пурăнакансем.

Сăмах май, республикăри арçынсен вăтам шалăвĕ хĕрарăмсем илекеннинчен 41 процент пысăкрах.

Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – вăй питти ӳсĕмре пурнăçран уйрăлакансем /вилнисен пĕтĕм йышĕн 42 проценчĕ чухлĕ/ нумай. Шел те, ӳсĕмĕн асăннă ушкăнне кĕрекенсенчен автансăр яла ăсаннисен шучĕ хĕрарăмсемпе танлаштарсан 5 хут ытларах /3658 тата 752 çын/ пулнă. Пурнăçран вăхăтсăр уйăракан сăлтавсен шутĕнче: инкек-синкек, наркăмăшланни тата аманни /34 процент/, юн çаврăнăш тытăмĕн чир-чĕрĕ /26/, апат ирĕлтерекен органсен амакĕ тата усал шыçă /10-шар/, сывлав органĕсем хавшани /9/.

Пĕтĕмĕшле илес тĕк, Чăваш Енĕн паянхи вăтам арçынни чăннипех илĕртӳллĕ: хулара пурăнакан вăй питти чăваш, çемьене хаклать, вĕреннĕ çын, ĕçе юратать. Шел те, сывлăха упрассине тивĕçлипе хакламасть тата сывă пурнăç йĕркине тытассине тĕпе хумасть – ку енĕпе хăйне ырă енне улăштарас тăк чăннипех тĕслĕх пулса тăмаллискер вăл.

■ **В.ИЛЬИНА хатĕрленĕ**

Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ

- Чĕре тĕрĕс мар тапать-и?
- Пуç ыратсан мелиссапа илепер пулăшаççĕ.
- Ват хăмпи шыçсан.
- Холестеринпа кĕрешетпĕр.
- Лайăх кăмăл – хастарлăх никĕсĕ.
- Рис квасне сивĕтмĕшре упрамалла.
- Гастрит аптратсан.
- Юн пусăмĕ пĕчĕк.
- Çăкăр тĕтĕмĕпе сывласа.

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пулĕмре йышăнаççĕ.

Администрация Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли в собственность, находящейся в общей долевой собственности, размер земельной доли 21/340, муниципального образования Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики, по цене, определяемой как произведение 15% процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, Тюмеревское сельское поселение, кадастровый номер 21:26:240301:95.

Заявления принимаются с 28 февраля 2014 года в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Тюмерево, ул. Калинина, д.4, тел.: 8(83548) 2-07-43, 2-08-05.

Администрация Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли в собственность, находящейся в общей долевой собственности, размер земельной доли 8/340, муниципального образования Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики, по цене, определяемой как произведение 15% процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, Тюмеревское сельское поселение, кадастровый номер 21:26:240301:95.

Заявления принимаются с 28 февраля 2014 года в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Тюмерево, ул. Калинина, д.4, тел.: 8(83548) 2-07-43, 2-08-05.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:000000:3756 площадью 7124 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Первомайское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел. 8(83532)6-14-26.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:340308:432 площадью 49838 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел. 8(83532)6-14-26.

ПРОДАЮ

33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень, торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
Çаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пулĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Çаçатри рекламăçăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 702.